24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1941
ОКТЯБРЬ
12
ВЫРСАРНИКУН
241 (5956) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ.

Ылханлă тăшмана хирĕç халăхăн мĕнпур вăйне хурса кĕрешер!

Гитлерла вăрă-хураксем малалла, пирĕн тăван çĕршывăн промышленность центрĕсем патнелле сĕкĕнсе кĕме пĕтĕм вăя хурса тăрăшаççĕ. Совет войскисем хăватлăн хирĕç тăрса тăшмана питĕ пысăк çухатусем кăтнине пăхмасăрах, Германи çарĕсен командованийĕ çапăçăва çĕнĕрен те çĕнĕ вăйсем хăваласа кĕртет, хĕл çитиччен çитĕнӳ тума урса-кайсах талпăнать. Фронтри çапăçусем хаярланнăçемĕн хаярланса, сарăлса пыраççĕ.

Большевиксем совет халăхне чăнлăх сине, вăл темĕнле хаяр пулсан та, ялалах тӳррĕн пăхма вĕрентнĕ. Пирĕн тăван çĕршыв сине гитлерла Германия çавтери ирĕр ултавпа килсе талăнсан, пире ирĕксĕр туртса кĕртнĕ çак вăрçăра ĕç Совет государствин пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен, ССР Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе вилĕмĕ çинчен пырать тесе, Сталин юлташ мĕнпур витĕмлĕхпе палларĕ турĕ.

Нимĕçсен фашистла сынçиллĕсем хăйсем тытса илнĕ хуласемпе ялсенче тăвакан çавтери тискер ĕçсем гитлерла Германия çĕнтерес пулсан совет сыннисене мĕн кĕтсе тăрассине кăтартса параççĕ. Çак вăрçăра вăта çĕрте тăрса юлмалли çук—е эпир гитлера çарсене çапса аркататтăр, вĕсем вара хăйсен ирĕр юнĕпе чыхăнса ларĕç, е гитлеровецсем пирĕн чеченлекен çĕршыва çаратса пĕтерĕç, ăна чура туса хурĕç те миллионшар совет сыннисен юнĕпе шутерĕç. Нимĕçсен фашистла кĕтĕсĕвĕсене хирĕç пыракан вăрçă — вăл пурнăçăн, аслă вырăс халăхĕн, Украина, Белорусси тата ССР Союзĕнчи ытти халăхсен пурнăçĕшĕн пыракан вăрçă, хамăран аттесемпе аннесен, хамăран арăмсемпе ачасен пурнăçĕшĕн пыракан вăрçă, хамăран аслă тăван çĕршыв пурнăçĕшĕн пыракан вăрçă.

ССР Союзне хирĕç туса пыракан вăрçăра виçĕ уйăх çурă хушшинче сынсемпе материалсем питех те нумай çухатнине пула фашистла тискер-кайăк хытах аманнă. Анчах та аманнă тискер кайăк çĕнĕ хаярлăхпа, хытăрах та хытăрах урса çапăçăва ывтăнать. Пирĕн тăван çĕршыв умне тухса тăнă хаяр хăрушлăха вĕçне çитиех усăсăн нурса, ăнланса илмелле. Хăрушлăх çинчен ăнланса илни кашни совет патриочĕн вăйне татах та ытларах ӳстермелле, тăван çĕршыва хӳтлекен кашни сынăн çирĕплĕхĕпе паттăрлăхне татах та ытларах çĕклемелле.

«Фашистла Германие хирĕç пыракан вăрçа, — тенĕ Сталин юлташ июлĕн 3-мĕшĕнче, — яланхи пек вăрçă тесе шутламалла мар. Вăл ирĕ çар хушшинчи вăрçă çеç мар. Вăл, çавăнпа пĕрлех, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç пĕтĕм совет халăхĕ туса пыракан аслă вăрçă пулса тăрать».

Çак вăрçа пĕтĕм совет халăхĕ туса пырать. Вăрçăра халăхăн кунçулĕ пирки, пирĕнтен кашнин кунçулĕ пирки ĕç тытăлать, çавăнпа та пирĕнтен кашниех хăйĕн мĕнпур вăйне, хăйĕн мĕнпур шухăшĕпе ĕмĕчĕсене, хăй чĕрин мĕнпур кине ирĕр те тылханлă тăшмана отпор парас ĕçе хума тивĕçлĕ.

Хăшпĕр вырăнсенче тăшман юлашки кунсенче маллапа сĕкĕнсе кĕме пултарчĕ. Çĕнĕ районсем фронт çывăхĕнчи районсем пулса тăчĕç. Çав районсенчи партипе совет организацийĕсен задачисем, çав районсенче пурăнакан мĕнпур сынсен задачисем уйрăмах пысăк. Вĕсем çирĕп те чăтăмлă пулнинчен, вĕсем организованно та сыхăлăхлă пулнинчен эпир гитлерла кĕтӳсене паракан отпорăн хăвачĕ нумай килет.

Урса кайнă тăшман хĕснинчен çирĕплĕн хӳтленекен геройла хуласенчи — Одессăпа Ленинградри ĕçсыннисем паттăрлăхăн тĕлĕнмелле паха тĕслĕхĕсене кăтартса параççĕ. Мухтавлă ленинградецсемпе одесситсем кунсерен геройла ĕçсем туса пыраççĕ, вĕсем çинчен ӳлĕм чаплă юрăсем çырăнĕç. Çав хуласенчи кашни урама, кашни переулока вăйлă оборона тума хатĕрлесе çитернĕ, çав хуласенчи кашни предприятипе кашни çурта оборона крепоçĕ туса хунă.

Ленинградри тата Одессăри предприятисенче туса хатĕрлекен хĕçпăпала фронта татти-сыпписĕр ярса тăраççĕ. Рабочисемпе работницăсем тăшмана валли хурçă кучченĕçсем, совет çĕрĕсене хӳтĕлекенсем валли хурçă броня ывăнма пĕлмесĕр туптаççĕ. Татти-сыпписĕр кайса тăраççĕ фронта çĕнĕрен те çĕнĕ пулăшусем, боецсен çĕнĕрен те çĕнĕ отрячĕсем. Фронта хăйсен ирĕкĕсемпе каякансен речĕсене коммунистсемпе комсомолецсем ертсе пыраççĕ. Пурне те çар ĕçне вĕрентесси çирĕп йĕркеллĕ те дисциплиналлă пулса пырать, час-часах вĕренӳ хыççăн отрядсем фронта каяççĕ, унта вĕсем хăйсем илнĕ пĕлӳсемпе тăшмана хирĕç çапăçнă çĕрте практикăллăн усă кураççĕ.

Çав хуласенчи ĕççыннисем хăйсене хӳтĕлекен паттăрсемпе — Хĕрлĕ Çарăн тата Тинĕс-çар флочĕн боецĕсемпе, командирĕсемпе, политработникĕсемпе пĕр пурнăçпа пурăнаççĕ. Çав тери тимлĕн тăрăшаççĕ Ленинградпа Одесса хулисенчи хĕрарăмсемпе ачасем совет воинĕсемшĕн! Аманнисене пăхасси, фронта парнесем ярасси, тăван çĕршыва хӳтĕлекенсем валли ăшă ялаласем хатĕрлесе пухса парасси — çаксене пурне те совет патриоткин чимлĕ те ăста алли тăвать.

Эпир фашистла тискер-кайăксене çĕнтерессине ниçĕлми çирĕп шанса тăратпăр. Анчах çĕнтерӳ хăй тĕллĕн килмест — ăна çĕнтерсе илмелле, çĕнтерӳ патне каймалли çул çăмăл мар, вăл кашни совет гражданинне кирек мĕнле çухатăва та тӳссе иртермешкĕн халĕр тăма хушать. Пирĕн пĕтĕм çĕршыв пĕрлĕхлĕ çар лагерĕ пулса тăмалла, хамăран пĕтĕм пурнăçа пирĕн пĕр ĕмĕте — тăшмана отпор парас, тăшмана çапса аркатас ĕмĕте пăхăнтармалла.

Чи малтан çакă вăл фронт çывăхĕнчи вырăнсене пырса тивет. Кунта кашни парторганизаци, кашни совет органĕ, кашни предприятипе учреждени, кашни совет сынни пирĕн тăван çĕршыв çине çитнĕ хăрушлăх умĕнче хаяр экзамен тытать. Пĕрремĕш задача — фронта пур енĕпе те пулăшу парса пырасси, Хĕрлĕ Çара пулăшу парса пырасси пулса тăрать.

Фронт çывăхĕнчи железнодорожниксен ниçăçанни пек мар йĕркеллĕн те организованно ĕçлемелле. Отечественнăй вăрçăн летописĕне транспорт работникĕсен паттăр ĕçĕсем сахал мар çырăнса юлнă ĕнтĕ, чугунçул транспортне пирĕн тивĕçлипех Хĕрлĕ Çарăн тăван пиччĕшĕ тесе чĕнеççĕ. Ывăр условисенче, час-часах тăшман авиацийĕ персе тăнă вут-çулăм айне лексе, пирĕн паттăр железнодорожниксене кирлĕ грузсене фронта вăхăтра çитерсе тăраççĕ. Паттăр железнодорожниксене чыслăх та мухтав! Вĕсен примерĕ фронт çывăхĕнчи çулсем çинче ĕçлекен кашни работника хавхалантарать.

Фронт çывăхĕнчи вырăнсенче пурĕне те çар ĕçне вĕрентсе хатĕрлессине уйрăмах организованно, хурçă пек çирĕп дисциплинăпа туса пымалла. Фашистла ирĕрсем хăратса тăракан тăван çĕршывăн паттăрăн кĕрешекенсен стройне çийĕнчех тăма çар ĕçне хăвăхăтра та ăнăçлăнрах алла илмелле.

Тăшман пирĕн çар чăçĕсен тылне сĕкĕнсе кĕме хăтланать. Тăшман шăтарса кĕнине, тăшман десанчĕсене организованнăй отпорпа кĕтсе илмелле, тăшман десанчĕсене пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе пымалла. Тăшманăн ирĕр ĕçне е унăн десантне хирĕç тăрса сирсе яма яланах сивчĕ те хатĕр пулмалла— çакăн пек ĕнтĕ партипе совет организацийĕсен тӳрĕ обязанноçĕ, çакăн пек ĕнтĕ фронт çывăхĕнче пурăнакан ĕçсыннисен обязанноçĕ.

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç пыракан вăрçăн мĕнпур опычĕ çăкна кăтартса парать: тăшман кĕсснине хирĕç отпор парас ĕçре пирĕн боецсем çирĕп те чăтăмлă пулни кирлĕ. Пирĕн хушăра тăшман пур майсемпе те паника сарма хăтланать, вăл хăйĕн «психикăллă атакин» сине пысăк шанчăк хурать. Пирĕн фронтри чассем çапăпусенче писĕхсе çитнĕ ĕнтĕ, вĕсем тăшманăн ирĕр меслечĕсене вăхăтра тавăрса илме пĕлеççĕ. Çăкăнпа пĕрлех фронт çывăхĕнче пурăнакан çынсен те тăшмана çирĕппĕн те паттăрăн кĕтсе илни, тăшмана мĕнле те пулин ытларах сиен кӳме тăрăшни кирлĕ. Партизансен аллри горючи тултарнă бутылкăсем, граната çыххисем пăрахса фашистсен мĕн чухлĕ танкне çапа-çапа аркатнă, çунтарса янă! Партизансен тӳрĕ пулăшăвĕпе пырса тивнипе фашистсен мĕн чухлĕ офицерĕсемпе салтакĕсем хăйсене валли вилĕм тупнă!

Тăшман хĕрхенӳсĕр. Çавăнпа вăл пирĕнтен те хĕрхенӳ ан кĕттĕр!

Халăхăн мĕнпур вăйне пухса тăшмана отпор парар! Çакăн пек пирĕн таса тивĕçлĕх!

(«ПРАВДА» хаçатăн октябрĕн 11-мĕшĕнчи умстатьи).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 10-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă. Вязьма, Брянск тата Мелитополь енĕсенче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулнă.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче немĕçсенне 39 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 27 самолет пĕтнĕ.

* * *

Фронтăн Кăнтăр-Хĕвеланăç енче протитанкăн хаяр атакисене хирĕç пирĕн часçем вăйлăн çапăçаççĕ. Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн бомбардировщиксен, штурмовиксен тата истребительсен темиçе группи пĕрле фронт участокĕсенчен пĕринче немĕçсен 33 танкне, 13 орудине, пехота ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 150 автомашинăна, 150 лава, горючи тултарнă темиçе цистернăна, тăшманăн утлă çарĕн пĕр взводне тата унăн пехотин 5 ротине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче çапăçакан пирĕн самолетсен группи, çанталăк юрăхсăр пулнине пăхмасăр, хамăран войскăсене хӳтлесе пынă, тăшманăн автоколоннисем, коммуникацийĕсем тата перспе тăракан вырăнĕсем çине темиçе хутчен ăнăçлăн пыра-пыра тапăннă. Фронт участокĕсенчен пĕринче совет летчикĕсем немĕçсен пехоти ларса пыракан тата боеприпассем тиенĕ 141 автомашина çине, çар хатĕрĕсем тиенĕ темиçе çĕр лав çине, чугунçул çинчи темиçе эшелон çине тата горючи тултарнă нумай автоцистернăсем çине бомбăсем пăрахнă. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн штурмовиксен группи немĕçсен инçете перекоп 13 орудине, 6 батарейине тата пĕчĕк калибрлă орудисене нумай пĕтерсе тăкнă. Сывлăпри çапăçусенче немĕçсен 9 самолетне перспе антарнă.

* * *

Ленинград патĕнчи вырăнсенче пирĕн авиаци противникăн пĕр çĕре пухăнакан войскисем çине пĕрмаях пыра-пыра талăнать.

Пирĕн авиаци пĕр кун хушшинче немĕçсен 26 танкне, 3 бронемашинине, пехота ларса пыракан 109 автомашинăна, 48 зенитнăй орудине, 21 пулемета, тĕрлĕ калибрлă 7 орудие тата горючи тултарнă автоцистернăсене нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи районĕсенчен пĕринче пирĕн ялсене тытса илнĕ фашистла мародерсене В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ пĕрмаях пĕтерсе пырать. Икĕ уйăх хушши çапăçса, отряд тăшманăн горючи тултарнă 8 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 19 автомашинине, продовольстви тата ытти тĕрлĕ хатĕрсем тиенĕ 15 автомашинине, 4 çăмăл автомашинине, 14 мотоциклне пĕтерсе тăкнă. Партизансен çак вăхăт хушшинче 12 пĕтере взрыв туса сирпĕтсе янă, противникăн вăрман витĕр иртсе пыракан колоннисем çине 26 хутчен тапăннă. Çав çапăçусем вăхăтĕнче отрядри боецсем фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çын ытла вĕлернĕ.

Çапăçусенче темиçе хут пулса патăрлăх кăтартнă партизан Ч. юлташ ертсе пынипе, çав отрядри боецсен ушкăнĕ, нумаях та пулмасть, çул хĕринче засада тунă. Засада тунă вырăна противникăн автоколонни çывхарса çитсен, партизансем тăшманăн малта пыракан машинине сирпĕнтерсе янă. Ытти машинисем ниçталла та кайма пултарайман. Колоннăна чарса лартнă. Нимĕçсем ним тума пĕлмесĕр тухăнса кайнипе усă курса, партизансем колонна çине пеме пуçланă. Партизансем тăшманăн автомашинисене 10 машинăран кая мар пĕтерсе тăкнă, вара вăрмана тарса пытаннă. Партизансен тепĕр группи тăшманăн бронемашинăна танкетка хӳтлĕхĕнче пыракан мотоциклĕсен колонни çине пырса тапăннă. Пуçланса кайнă çапăçура партизансем тăшманăн темиçе мотоциклне пĕтерсе тăкнă, бронемашинине сĕмĕрнĕ. Тăшманăн танкетки çапăçăва хушшăмасăрах аякалла тарнă. Тăшмана çапса сĕмĕрнĕ. Çапăçу хирне тăшманăн пĕр пулемечĕ, темиçе автомачĕ, тумтирсем, продовольстви тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем нумай выртса юлнă. Немĕçсем çав ялсенче пурăнакансене вăрăхурахла, çаратса 120 ĕне пухнă пулнă. Çав ĕнесене çак кунсенче партизансем немĕçсенчен каялла туртса илнĕ.

* * *

Мелитополь районĕнче пирĕн истребительсем нимĕçсен «ХЕ-111» маркăллă бомбардировщикне перспе антарнă, самолетăн экипажне тытăкана илнĕ. Тытăкана илнĕ ефрейтор-летчик Герхард Файль допрос тунă чухне çапла пĕлтернĕ: «Пирĕн экипаж сывлăш çар вăйĕсен 4-мĕш корпусĕнчи бомбардировщиксен 27-мĕш эскадрине кĕрет. Вăрçă пуçланнă чухне 27-мĕш эскадрăра самолетсем 50 ытла пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче эпир 15 машинăран кая мар çĕнĕ машинăсем илтĕмĕр. Эскадра самолетсенчен сурринне ытла сухатрĕ те ĕнтĕ».

Тытăкана илнĕ унтер-офицер, летчик-наблюдатель Ингфрид Финке çапла каласа панă: «27-мĕш эскадрăн виççĕмĕш группинчи бомбардировщиксем пурте стройран тухрĕç. Çапăçăва хутпăнма пултаракан самолетсем пĕрремĕшпе иккĕмĕш группăсенче 20 машинăран ытла мар юлчĕç». Тытăкана илнĕ ефрейтор радист Иозефа Крик: «Пирĕн часри самолетсенчен нумайĕшне совет летчикĕсем перспе антарнă тата сывлăшри çапăçусенче нумай хутчен сиенленĕ пирки пирĕн самолетсем юрăхсăра тухнă», тесе калаланă.

* * *

Ленинград облаçĕн фашистсем тытса илнĕ хулисемпе ялĕсенче пурнăçне тĕрлĕ халăха чăтма çук вăйлăн çаратаççĕ. Нимĕç салтакĕсем килĕренех ухтарса çӳреççĕ. Мĕнпур ăшă тумтирсене — кĕрĕксене, çăматăсене, резинăран тунă япаласене, çĕтĕлсе пĕтнĕ галошсене те, турта-турта илеççĕ. Пĕтĕм тыпула туртса илеççĕ. Çак çаратусем вăхăтĕнче унта пурăнакан çынсене массăллăн вĕлереççĕ тата тискер майсемпе вĕсенчен мăшкăллаççĕ. Гитлерла бандитсен калама çук тискер террорне пăхмасăрах, унта пурăнакан халăх партизансене пур майсемпе те пулăшса пырать, вĕсене фашистсенчен пытарса усрать. Кашни районра тенĕ пекех унти халăхран нумайĕшĕсем вăрмансенче пытанса пурăнаççĕ. Перспе вĕлерессипе хăратса, нимĕçсем вĕсене халех яла тавăрăнма ӳшакан темиçе приказ та кăларнă. Анчах хрестенсем ялсене тавăрăнмаççĕ, вăрмансенчех пытанса пурăнаççĕ. Партизансен отрячĕсене кашни кунах совет патриочĕсен çĕнĕ те çĕнĕ ушкăнĕсем пырса хутшăнаççĕ.

Октябрĕн 11-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пĕтĕм фронтра çапăçусем туса пынă, Вязьма тата Брянск енĕсенче уйрăмăнах вăйлă çапăçусем пулнă.

* * *

Брянск енче наступлени тăвакан противникăн танкĕсемпе мотопехотине хирĕç пирĕн войскăсем хаяр çапăçусем туса пыраççĕ. Çапăçусенчен пĕринче противникăнне 43 танк, нумай орудисемпе пулеметсем тата пĕр батальон ытла пехота пĕтернĕ. Çав енчи тепĕр участокра противник 23 танк, пехота лартса пыракан тата боеприпассем тиенĕ автомашинăсене 80 çитти, противотанковăй 13 тупă тата пулеметсем нумай çухатнă.

* * *

Фронтăн Вязьма енче пирĕн оборона ăшне хĕсĕнсе кĕнĕ немĕçсен фашистла войскисен вăйлă атакисене сире-сире ярса, пирĕн чассем противника пысăк сиен кӳреççĕ. Çак енчи участоксенчен пĕринче кăна çапăçу хыççăн çапăçу хирне тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 800 çын ытла вилсе выртса юлнă.

* * *

Фронтăн Хĕвеланăç енче немĕçсем тытса илнĕ районсенчен пĕринче çапăçакан, К. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ кăнтăрла колхоз утине тиекен немĕçсен 60 салтакĕ çине пырса тапăннă. Сиеччен шăппăн пырса партизансем фашистсене хупăрласа илнĕ те пур ĕнчен те пеме пуçланă. Çапăçура 15 немĕçе вĕлернĕ, ытти сăпăçу хирне тăрлă калибрлă 7 орудие тата горючи тултарнă автоцистернăсене нумай пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Çурçĕр-Хĕвеланăç енчи районĕсенче пĕринче пирĕн ялсене тытса илнĕ фашистла мародерсене В. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрячĕ пĕрмаях пĕтерсе пырать. Икĕ уйăх хушши çапăçса, отряд тăшманăн горючи тултарнă 8 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 19 автомашинине, продовольстви тата ытти тĕрлĕ хатĕрсем тиенĕ 15 автомашинине, 4 çăмăл автомашинине, 14 мотоциклне пĕтерсе тăкнă. Партизансен çак вăхăт хушшинче 12 пĕтере взрыв туса сирпĕтсе янă, противникăн вăрман витĕр иртсе пыракан колоннисем çине 26 хутчен тапăннă. Çав çапăçусем вăхăтĕнче отрядри боецсем фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çын ытла вĕлернĕ.

Çапăçусенче темиçе хут пулса патăрлăх кăтартнă партизан Ч. юлташ ертсе пынипе, çав отрядри боецсен ушкăнĕ, нумаях та пулмасть, çул хĕринче засада тунă. Засада тунă вырăна противникăн автоколонни çывхарса çитсен, партизансем тăшманăн малта пыракан машинине сирпĕнтерсе янă. Ытти машинисем ниçталла та кайма пултарайман. Колоннăна чарса лартнă. Нимĕçсем ним тума пĕлмесĕр тухăнса кайнипе усă курса, партизансем колонна çине пеме пуçланă. Партизансем тăшманăн автомашинисене 10 машинăран кая мар пĕтерсе тăкнă, вара вăрмана тарса пытаннă. Партизансен тепĕр группи тăшманăн бронемашинăна танкетка хӳтлĕхĕнче пыракан мотоциклĕсен колонни çине пырса тапăннă. Пуçланса кайнă çапăçура партизансем тăшманăн темиçе мотоциклне пĕтерсе тăкнă, бронемашинине сĕмĕрнĕ. Тăшманăн танкетки çапăçăва хушшăмасăрах аякалла тарнă. Тăшмана çапса сĕмĕрнĕ. Çапăçу хирне тăшманăн пĕр пулемечĕ, темиçе автомачĕ, тумтирсем, продовольстви тата тĕрлĕ çар хатĕрĕсем нумай выртса юлнă. Немĕçсем çав ялсенче пурăнакансене вăрăхурахла, çаратса 120 ĕне пухнă пулнă. Çав ĕнесене çак кунсенче партизансем немĕçсенчен каялла туртса илнĕ.

* * *

Ленинград предприятийĕсенчи çамрăксем хăйсен вăйне шеллемесĕр тăрăшса ĕçлеççĕ. Тăван хулана сыхлас тесе çамрăк ленинградецсем хăйсен ашшĕ-амăшĕсемпе пĕрле хăватлă та хăрушă хĕпăпалсем тăваççĕ. Кировски заводри çамрăк фрезеровщик А. Хозяйчиков юлташ ултă çыннăн ĕçлет. Вăл икĕ станок çинче ĕçлеме вĕренсе çитнĕ тата кашни станок çинчех куллен виçшер норма тултарать. Н-ски заводри 47-мĕш цехри токарьсем: Архипов, Николаев, Астафьев тата Щербаков юлташсем нормăна тăтăшах иккĕршер процент тултараççĕ. Ремесленнăй училищĕре вĕренекенсем Афанасьевпа Фруктов юлташсем задание 285 процент тултараççĕ, стахановец-доводчик Чирков юлташ нормăна 400 процент тултарать. 1-мĕш номерлĕ Ремесленнăй училищĕре вĕренекенсем Долговец, Таиров, Нечаев, Фомченков, Власов тата Харлуков юлташсем вăрçă пуçланнăранпа малтанхи кунсенчен тытăнсах заданисене 220-шер процент тултараççĕ.

Ăслă командирсем

Танковăй войскăсен начальство тата рядовой составне СССР орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлани

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн, ССР Верховный Совечĕн Президиумĕ октябрĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, танковăй войскăсен (начальство тата рядовой составĕнчи çынсен группине наградăланă. **Ленин орденĕпе** — 2 çынна, **Хĕрлĕ Ялав орденĕпе** — 11 çынна, **Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе** — 16 çынна, **«За отвагу» медальпе** — 3 çынна наградăланă. (ТАСС).

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН

УКАЗĔ

Танкиста старший сержант И. Т. Любушкина Совет Союз Геройĕн званине парасси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн, **Ленин орденĕ** тата **«Золотая Звезда»** медалĕ парса, танкиста старший сержант Иван Тимофеевич **Любушкина Совет Союз Геройĕн** званине парас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1941 çулти октябрĕн 10-мĕш.

ТАСС опроверженийĕ

«Нью-Йорк таймс» хаçат çакăн пек пĕлтерӳ сарать: США Президенченĕн г. Рузвельт çырăвĕн, виçĕ державăн конференцийĕ вăхăтĕнче Мускавра Сталин юлташ илнĕскерĕн, текстне советăн Верховнăй Командованийĕ радио тăрăх совет войскисене панă тата çавна пула çак çыру немĕçсемшĕн палламăн пулса тăнă пулать.

ТАСС-а çапла пĕлерме полномочи панă: г. Рузвельтăн Сталин юлташ патне янă çыруне советăн Верховнăй Командованийĕ радио тăрăх паман тата пама та пултарайман, «Нью-Йорк таймс» çапла пĕлтерни вăл йăлтах суя сăмах пулса тăрать.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли— ăшă тумтирсем

ÇЕМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç районра сарăлсах пырать. Районри склада куллен вуншар тирсем, çĕлĕксем, фуфайкăсем, темиçе килограмм çăм, темиçе метр пир тата ыт. ăшă япаласем килсе тăраççĕ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе Вăрманти колхозсен ялсоветĕнче те начар мар организацилеме-ха. Кунти колхозниксем тăван боецсем валли ăшă тумтирсем тума 74,8 килограмм çăм, 140 тир, 23,3 метр пир тата 2 кĕрĕк пиншак, 2 çăматă, алшисем, чăлăсем т. ыт. пачĕç. Колхозница Мария Каяшова пĕччен 7 тир, 2,6 килограмм çăм, 3 метр пир тата пĕрер мăшăр алшиппе носки пачĕ. «Красный Октябрь» колхозри МТФ заведующийĕ Варвара Арзамасова пĕрер мăшăр алшиш, носки, 4 метр пир, пĕр килограмм çăм тата 2 тир пачĕ.

Анчах уйрăм ялсоветсенче ăшă тумтирсем пухас ĕçе кирлĕ пек организацилемен-ха. Ку уйрăмăнах Савадеркино ялсоветĕнче курăнать. Паянхи кунах ялсовечĕпе пĕтĕмпе те 1 çăматă, 5,5 килограмм çăм, 41 тир кăна панă. Çакă вăл ялсовет работникĕсем тата комсомолăн пуçламăш организацийĕсем ĕç çине çиелтен пăхнинчен, ĕççыннисем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе япăх организациленинчен килет.

Хар. ЛИСИН.

—o—

Занятисем йĕркеллĕ иртеççĕ

СĔНТĔР. Пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси Ярославкăри вĕренӳ пунктĕнче йĕркеллĕ пырать. Кунта çар ĕçне вĕренме пухăннă граждансем вăрçă ĕçне вĕренме тата боевой хĕпăпала лайăх тытма, стройпа утма, противогазпа усă курма тĕплĕн вĕренме тăрăшнине кăтартса пачĕç.

Малтанхи занятисенче дисциплинарнăй устав тата Оборонăн Государственный Комитечĕ пурне те обязательнăй йĕркепе çар ĕçне вĕрентесси çинчен йышăннă постановление ăнлантарса пачĕç. Унтан вĕренӳ подразделенийĕсене туса йĕркелерĕç. Занятисем малтанах туса хатĕрленĕ расписанисем тăрăх пулса иртеççĕ. Вĕренме пухăннисем çирĕп дисциплинăллă пулма тăрăшаççĕ.

Малтанхи заняти хыççăн çар ĕçне вĕренекенсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта вĕренӳ пунктĕнче начальникĕ Сапожников юлташ малашне занятисем мĕнле пулса пырасси çинчен каласа пачĕ.

Вĕренӳ пунктĕнче Кăпаспи пункта социализмлă ăмăртăва тухма чĕнчĕç, редколлеги членĕсене суйласа икĕ эрнере тĕрер номер «За родину» ятлă стена хаçачĕ кăларса тăма йышăнчĕç.

Н. М.

—o—

Хĕле кĕме хатĕр

КАНАШ. (**Хамăр корр.**). Хусан чугунçулĕн Канаш узелĕ хĕллене тĕплĕн хатĕрленсе пырать. Сентябрĕн 25-мĕш тĕлне депон пур çурчĕсене те юсаса çитернĕ: стенасене шуратнă, чӳрече кантăкĕсене лартнă, алăксене ăшă тытмалла, тунă. Депо çурчĕсене юсас ĕçре уйрăмăнах Черкассов юлташ ертсе пыракан бригада тăрăшса ĕçленĕ.

Малта пыракан машинистсем Назаров, Сагитов, Чупаев, Тюрюкалов юлташсем тахçанах хăйсен паровозĕсене хĕл кунĕсенче ĕçлеме юрăхлă туса çитернĕ. Вĕсем механизмсене юсаса, пыв трубисене шăнса лармалла мар туса тухнă. Çакăн пек пурĕ 28 машинист паровозсене хĕл тумтирĕсене государствăран илмесĕр, хăйсен вăйĕпе хатĕрлеме пулнă.

Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне станци çурчĕсене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ. Железнодорожниксем хушшинче плотниксем, столярсем, печниксем, малярсем, стеклольщиксем тупăннă. Вĕсем стрелочнăй постсене, будкăсене, общежитисене тата служба çурчĕсене юсаса тухнă.

Станци çурчĕсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе уйрăмăнах ватă железнодорожник Дмитриев юлташ тăрăшса ĕçлерĕ. Чугунçул çинче вăл 50 çул ĕçлет.

Дмитриев юлташ ĕçре пример кăтартса, çамрăксене ĕçлеме хавхалантарса пырать. Вăл тăрăшнипе пĕтĕм ремонт ĕçне кану вăхăтĕнче, государство укçине пĕр пус та тăкакламасăр туса ирттерчĕç.

Канаш деповĕ хĕле кĕме пур енĕпе те хатĕрленсе çитрĕ.

Т. ИВАНОВ.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

☆ ★ ☆

БРЯНСК ЕНЧЕ

Брянск енче вĕçĕмренех темиçе кун хушши ĕнтĕ хаяр çапăçусем пыраççĕ. Немĕç командованийĕ вăл участока танксем, мотопехота, артиллери тата авиаци йышлă илсе пынă. Пĕр Н-ски соединение хирĕç кăна немĕçсем икĕ танковăй дивизи тата икĕ дивизи мотопехота илсе пырса тăратнă. Наступлении пирвайхи кунĕсенче пирĕн пĕр соединение хирĕç немĕçсен çĕр танкне яхăн тата виçĕ пехотăй дивизи çапăçнă.

Пирĕн войскăсем фашистсен часĕсем наступлени туса пынине вăйлăн хирĕç тăраççĕ, хирти укрепленисене тата ялсене геройла хăтлеççĕ. Авиаци, артиллери, танковăй соединенисем тата пехота тапăнса пыракан тăшмана пысăк сухатусем хăвараççĕ. Хăвăрт вĕçекен тата пикировка тăвакан бомбардировщиксем, штурмовиксемпе истребительсем кунне темиçе хут пысăк группăсемпе вĕçсе, немĕçсен шыв урлă каçма хатĕрленсе тăракан, бензинсем тултарма чарăннă тата колоннăсенче пыракан танкĕсемпе автомашинисене атакăлаççĕ. Вĕсем хĕснине тăшманăн противовоздушнăй оборони тăссе тăрăймасть. Туллимар сведенисем тăрăх, Рухле тата Кравченко командирсен летчикĕсем виçĕ кун хушшинче кăна тăшманăн 100 танкне яхăн пĕтерсе тăкнă, 41 автоцистернине горючипе пĕрле çунтарса янă, сакăр çĕрте бензин тултармалли вырăнсене взрыв тунă. Çав вăхăт хушшинчех 300 ытла транспортăй машинăсене пĕтерсе тăкнă, вăл шутра 180 машина офицерсемпе салтаксем ларса пыраканскерсем пулнă.

Немĕçсен колоннисем наступлени туса пыракан пĕтĕм çул тăрăх айлăмсем. Те çырмасенче, вăрманти пылчăклă çулсем çинче çĕмĕрлесе пĕтнĕ танксем, автомашина вончăкĕсем сапаланса выртаççĕ. Совет çĕрĕн кашни километрĕ тăшманăн хакла ларать. Ермашев полкăн часĕ пĕр çапăçура кăна нимĕçсен 300 салтакĕсемпе офицерĕсене, 6 оруди, 14 пулемет, 6 миномет пĕтерсе тăкнă, 45 çынна тытăкăна илнĕ.

Германи танкĕсем наступлени туса пыракан çулсенчен пĕрин çинче нимĕç танкĕсем пирĕн питĕ те тĕплĕн пытанса тăнă тăватă артиллери батарейисем çине пырса тухнă. Орудисем тарăн çырма тĕлĕнче йывăç тĕммисем хушшинче тăнă, çырма хĕррипе шоссе çулĕ пынă. Орудисенчен неме малтанах тĕп-тĕп хатĕрленсе тăнă пулнă. Танксем килиппе хурсанах пур орудисенчен те пĕр харăс тӳрĕ наводкăпа вăйлăн неме тытăннă. Нимĕçсен машинисене пĕрин хыççăн тепринне вут хыпса илнĕ, вĕсем çырмана йăваланса аннă. Çав çапăçура пирĕн артиллеристсем нимĕçсен 50 танкне ытла пĕтерсе тăкнă. Танксен хăвăрт куçса пыракан ушкăнне чарса лартнă. Нимĕçсен колоннин ирĕкĕрех каялла çавăрăнса, урăх çулсем шырамалла пулнă.

Хамăр чассене çĕнĕ вырăна йĕркелĕ куçма май туса парас тесе, пирĕн чассем час-часах контратакăсем тăваççĕ. Соловьев полкăн боецĕсем çĕрле нимĕçсен полкне контратака туса, ăна каялла сирсе пăрахнă тата хамăр чассене оборонăра çĕнĕ вырăн ăшăнмалли майсене хатĕрлесе панă.

Пирĕн пехотинецсем, летчиксем, артиллеристсем çавтери чаплă героизм кăтартса çапăçаççĕ. Карпов полкăн отделенийĕ штыкпа атакăна кĕрсе фашистсен 16 салтакне пĕтерсе тăкнă. Халь Карпов полкăша, отлично вĕçленĕшĕн тата хăюллă пулнăшăн, дивизи командованийĕ взвод командирĕ пулса вĕлеме куçарнă.

Летчиксем те хăйсен героизмне нумай кăтартаççĕ. Лейтенант Шаповалов хăйĕн штурмовикĕ çинче пĕр кун хушшинче темиçе хут боевой вĕçевре пулнă. Унăн самолечĕ тăшман çине систмен çĕртен вĕçсе пырса, кашнинчех немĕç салтакĕсем хушшинче хăрушăлăхпа паника сарнă.

Шаповалов полкăн Н. ялĕ патне пыракан çул çинче кăна бомбăсем пăрахса тата пулеметпа тупăран персе тăшманăн 20 яхăн бензоцистернине çунтарса янă. Летчик-коммунистсем Марченко тата Сундухадзе противникăн салтаксем тиенĕ 12 машинине пĕтерсе тăкнă тата горючи усракан склада тивертсе янă. Кĕçĕн лейтенант Разумов С. юханшывĕ çинче нимĕçсен мотоколонни туçса пыракан кĕпере атакăланă. Зенитчиксем вăйлăн персе тăнă пулсан та, Разумов полкăш кĕпер çине тăватă бомба пăрахса ăна сирпĕтсе янă. Летчик Полухин полкăш сывлăшри çапăçура нимĕçсен «Хе-111» самолетне хăйĕн машинипе пырса çапнă.

Пирĕн чассем тăван çĕршывăн кашни пусăм çĕрне геройла хăтлеççĕ пулсан та, фашистла ордасем хăшпĕр участоксенче малалла кайнă. Анчах нимĕçсен тĕп шухăшĕсенчен пĕри — Хĕвеланăç енчи çара хупăрласа илес ĕмĕчĕ саланса кайнă.

Тăшман хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен вилкуписем урлă куçса пырать.

П. ТРОЯНОВСКИЙ.
В. ГРОССМАН.

(«Красная звезда» спецкорĕсем).

Паттăрлăхпа çирĕплĕх

КАНТАР-ХĔВЕЛАНАÇ ЕНĔ, октябрĕн 9-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Червяков лейтенантăн роти полкăн сылтăм флангĕнче наступлени туса пынă. Сулахайра саккăрмăш рота çапăçнă. Противник наступление каякансене хирĕç пулеметсенчен вăйлăн пенĕ, анчах та кирек мĕнле хаклă та пулин К. хули патне çĕмĕрсе тухма шут тытнă боецсемпе командирсене тытса чарайман. Кунĕпех хăватлă çапăçу пынă, çĕрле те канмалла пулман. Тул çутăла пуçланă, анчах рота çаплах малалла наступлени туса пынă. Ирхине тин противника хăйĕн позицинчен сирĕтсе кăларнă та рота хула хĕрринче çирĕпленсе тăнă.

Ротăн сулахай флангĕнче хăйĕн отделенийĕпе пĕрле çапăçакан сержант Доценко кӳртĕри саккăрмăш ротăн командирне фашистла пуля ураран ӳкернине курнă. Вăл хăйĕн боецĕсемпе пĕрле аманнă командир патне хăвăрт пынă та ăна çĕклесе çапăçу хирĕнчен кăларнă.

Станковăй пулеметăн пĕрремĕш номерĕ Мартыненко кăнтăрла виçĕ сехетрен пуçласа çĕрле 12 сехете çитиченех фашистсене пĕрмаях персе тăнă. Унăн ури аманнă, вăл неме пăрахман, хăйĕн суранне те сыхайман. Хулĕ аманнă, çаплах вăл неме пăрахман. Мартыненко юнне юхтарса пулемет патронĕнчен тăнă, çакăнта вара ăна виççĕмĕш пуля лексе вĕлернĕ. Взвод командирĕн помощникĕ Игонькин пĕр пĕччен ех малалла кайнă та нимĕçсен группин хушшине пырса кĕнĕ. Игонькин фашистсем çине икĕ граната ывăтнă, 7 немĕçе вĕлернĕ, çапах та çапăçма пăрахман.

Сержант Каразей немĕç салтакĕсен группи пирĕн станковăй пулемета тытса илме тăнине курнă. Немĕçсем пулемета стройран кăларнă пулнă, пулеметчик патне шăвăнса пынă. Каразей гранатăсем йăтса тăшман патне уçаленсе пынă, немĕçсен темиçе салтакне вĕлернĕ, уçаленсе пулемета хăрушă мар вырăна сĕтĕрсе кăларнă.

Суанов, Лаврентьев, Павленко, Семиленко, Степаненко боецсем питех те лайăх çапăçнă. Вĕсем пăшалсенчен тĕл персе тăнине пула çапăçу хирĕнче вăтăртан сахал мар фашист выртса юлнă.

Лейтенант Николай Червяков, кĕçĕн политрук Александр Шарашенидзе чи лайăх пример кăтартса боецсене хаваслантарса пынă. Вĕсем винтовкăпа, гранатăпа тата кĕреçепе ăстан усă курса, вилĕмрен хăрамасăр, пур вăхăтра та малта, çапăçун чи хăрушă участокĕсенче пынă. Çапăçу пула çапăçу ăнăçлă пулнă.

А. МАЛИБАШЕВ.

Вязьма енчи хаяр çапăçусем

ВЯЗЬМА ЕНĔ, октябрĕн 9-мĕш. Вязьма енче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Хăйсен вăйĕсене пирĕннинчен ытларах пухса, фашистсем пирĕн войскăсене хаярран атакăлаççĕ. Хăшпĕр участокченче неприятель çĕнĕрен маларах кайма пултарчĕ. Пирĕн çар часĕсем хаярран хирĕç тăраççĕ, тăшмана пысăк сухатусем кӳреççĕ.

В. юханшывĕ тăрăх выртакан чикке Н-ски çар часĕ темиçе кун хушши хӳтлесе тăнă. Оборонăн çак райончĕ çине тăшманăн бомбардировка тăвакан авиацийĕ пысăк ушкăнсемпе пыра-пыра тапăнă, противник çак тĕле танксем тата пехот нумай хăваласа килнĕ, вĕсен атакине артиллерирен персе пулăпса тăнă. Пысăк сухатусем туса, тăшман пирĕн часăт оборонине юлашкинчен çапах та чылаях шала шăтарса кĕме пултарчĕ.

Анчах çакă вăл пирĕн боецсен тăшмана хирĕç тăрас çирĕплĕхне хавшатаймарĕ. Пирĕн часть хăйне тăшман йĕри-тавра çавăрса илнĕ пулсан та, çапăçăва малаллах туса пынă. Часах вăл, артиллерипе тата обозсемпе пĕрле, танксене хирĕç çапăçма малтан хатĕрлесе хунă районсене кĕрсе пытаннă. Çак районсемпе усă курса, часри подразделенийсем тăшман танкĕсене тӳремĕн тĕллесе пере-пере пăрахнă, çулсене тыта-тыта илсе, тăшмана çавăрăнкаласа маневрсем тума чарнă. Кунта нумай çĕрте нимĕçсен пехотине танксенчен уйăра-уйăра илсе пĕтерсе пынă.

Аякка сарăлакан оборонăна лайăх пухăнласа йĕркелени пирĕн часе тăшмана хирĕç ăнăçлăн тăма май пачĕ. Обстановка çавтери йывăр пулнă пулин те, войскăсемпе артиллерине ертсе пырас ӗç пăсăлман. Каялла чакма приказ илсен кăна пирĕн часть танксене хирĕç кĕрешме хатĕрленĕ пĕр районран тепĕр районна йĕркеллĕн чакма тытăннă, тапăнса килекен тăшманăн атакисене сирĕ-сирĕ ярса пынă. Мĕншĕн хĕçпăшалпа обоза тĕрĕс-тăкел упраса хăварса, часть хамăран войскăсем патне шăтарса тухнă та, çĕнĕ чикĕре çĕнĕрен оборонăна йышăннă.

Н-ски часть, вăйлăн хӳтленсе пырса, тăшмана пысăк сиен кӳнĕ. Нимĕçсем вилнисемпе кăна пин çын ытла сухатнă. Артиллерирен персе тата пирĕн пехотинецсем-истребительсем вăйлăн çапăнниче тăшманăн вунпилĕк танкĕсене пĕтерсе тăкнă. Лукин полкăшăн боецĕсем тăшмана хирĕç çирĕплĕн тăрса çапăçаççĕ. Пирĕн соединенисенчен пĕрине нимĕçсем çавăрса илме хăтланнă, çав соединени тăшмана хирĕç контратака туса нимĕçсен моторизованнăй соединенине çапса аркатнă. Тăшманăн çăкăлти çапăçу хирĕнче 4.000 çын вилсе юлнă. Активлăн хӳтленсе, час-часах контратакăсем туса, çак часть кӳршĕри чассем пулăшнипе нимĕçсене К. ялĕнчен çапса кăларнă. Кунта тăшманăнне татах 500 çын вĕлернĕ, 25 çынна тытăкăна илнĕ, 86 ручной пулемет, 6 миномет тата ытти нумай тĕрлĕ хĕçпăшал тытса илнĕ.

Вязьма енчи ытти участоксенче те тăшман çавăн пекех питĕ пысăк сухатусем тӳсет. Боллин полкăшăн боецĕсем пилăк кун хушшинче нимĕçсенне 220 танка яхăн, 140 автомашина, 22 миномет, 6 оруди тата фашистсен салтакĕсемпе офицерĕсене 7—8 пин çынна яхăн пĕтерсе тăкнă. Пур çĕрте те совет çĕрĕн кашни метрне нимĕçсем хăйсен юнĕпе çавтери вăйлăн шӳтерççĕ.

Пирĕн чассене кĕсме тăрăшса, тăшман çĕнĕрен-çĕнĕ вăйсем хăваласа килет.

(«Красная Звезда» хаçат, октябрĕн 10-мĕш.).

Кăнтăрта фашистсене хирĕç вăйлăн çапăçни

МЕЛИТОПОЛЬ ЕНĔ, октябрĕн 9-мĕш. Фронтăн чылай участокĕсенче çĕнĕ наступлени пуçласа, гитлеровецсем кăнтăра та пысăк вăйсем хăваласа килнĕ. Кунта вĕсем Итали, Румыни, Венгри дивизийĕсене, хăйсен мĕншăн резервисене пухнă та пирĕн оборонăна хирĕç юлашки кунсенче чылай атакăсем тума тытăннă.

Фашистсем Мелитополь енче уйрăмах пысăк вăйсем пухнă. Тăшман Азов тинĕсĕн çыранĕсем патнелле сĕкĕнет. Вăл хăйĕн юнлă аллине пирĕн кăнтăрти промышленность районĕсем патнелле тăсать. Вăл мĕнле те пулин пирĕн çĕршыв варринелле сĕкĕнсе кĕресшĕн.

Фашистла йытăтăвĕсене хирĕç Хĕрлĕ Çар часĕсем хăватлăн тăрса çапăçаççĕ. Мелитополь енче вăйлă çапăçусем пыраççĕ. Тапăнса килекен немĕçсем хĕснине Н-ски соединени виçĕ кун хушши чарса тăнă. Тăватăмĕш кунĕнче пирĕн чассенчен пĕри тăшманăн сулахай флангĕнчен çавăрăнса кĕнĕ те тăшмана тылран пырса çапнă. Фашистсем пысăк сухатусем тунă, çак участокра вĕсен наступлени тăвассине ирĕкĕрех чарса лартма лекнĕ.

Тăшман атакисене пирĕн чассем ытти участоксенче те патăрăн сире-сире яраççĕ. Анчах, Хĕрлĕ Çар боецĕсем тăшмана вăйлăн хирĕç тăраççĕ пулсан та, тăшмансен ордисем уйрăм районсенче пирĕн оборонăна тытса пыракан войскăсене кĕсме пултарчĕç. Хăшпĕр тĕлте немĕçсем пирĕн обороннăна шăтарса кĕнĕ, территорин уйрăм пайĕсене тытса илнĕ.

Вăхăтлăха тунă çак çитĕнӳсене фашистсем питĕ пысăк сухатусем туса тулнаççĕ. Кашни çапăçу хыççăн тăшманăн вилнисемпе амаллисем пиншер çын, вунпилĕк та çĕршер танксем, бронемашинăсем, орудисем выртса юлаççĕ.

(«Красная Звезда» хаçат, октябрĕн 10-мĕш.).

Хĕрлĕ Çар хăватлăн пырса çапнипе нимĕç йĕрĕке кăларнă. Ельня районĕнче фашистла бандитсен çĕршер виллăсемсем тата пытармасăр хăварнă пиншер виллисем выртă-выртă юлнă. **Укерчĕк çинче:** Малая Нежода местечки патĕнче выртакан Германи офицерĕсен виллисем тата фашистсен виллипринеĕсем.

Л. Великжанин фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Танксен Орел хули патĕнчи çапăçăвĕсем

Нимĕçсем Орел хулине илес умĕн пулнă çапăçусем—вăйлă çапăçусен кунĕсем пулса тăнă. Глухова районне тата кĕрсе кайнă фашистсем Брянск тата унтан хĕвелтухăçнерех оборонăра тăракан пирĕн чассем çине пырса çапма темиçе хутчен те хăтланса пăхнă. Анчах тăшман пур çĕрте те вăйлăн хирĕç тăнине тĕл пулнă. Вăл çывăх хулисене тата питĕ те кирлĕ районсене çавăрса илме хăтланса пăхнинчен нимĕн те тухман.

Çакăн хыççăн немĕçсем резервсем ытларах илсе пыма тытăннă. Хăйĕн «союзникĕсене» çаратса мĕн пухнă — çавсене йăлтах илсе пынă та немĕçсем çĕнĕ наступлени пуçласа янă. Вĕсем пирĕн сахалрах укрепленисем тунă участоксене шыранă. Çак ӗç те ăнăçăр пулнă хыççăн немĕçсем, Брянск хули çине хĕссе пырассине чăнармасăр, Орел хули çине наступлени тума шухăшланă.

Орел енче немĕçсем пур енĕпе те пирĕннинчен ăшшăнрах пулнă. Çакă вĕсене пирĕн оборонăна татса Орел хули патне тухма май панă. Кунта тăшманăн танксен колоннисем каллех хирĕç çирĕп тăнк çине пырса тухнă. Хулашăн виçĕ кун хушши çапăçу пынă. Орел хули тăшманăшăн питĕ хаклă ларнă. Хулана пырса кĕрекен çулсем тăшманăн çĕмĕрлесе пĕтнĕ танкĕсен тата транспортăй машинисен ваничĕсемпе тулса ларнă. Вăл танксемпе автомашинăсене пирĕн авиаци тата артиллерирен персе çĕмĕрсе тăкнă пулнă. Чĕрĕ вăйсем тĕлĕшпĕнех те фашистсем пысăк сухатусем тӳснĕ.

Орел хулине илнĕ хыççăн немĕçсен механизированнăй группи малалла çурçĕр енне кайма хăтланса пăхнă. Анчах Орел хулин тулашĕнчех немĕçсем пырса çитме ĕлкĕрнĕ совет танкĕсем çине пырса тăпăннă. Вăл танксем пирĕн чассен малти подразделенийĕсен пулнă. Пĕр вăхăт хушши танксен çапăçăвĕ пулса иртнĕ. Фашистсен темиçе машини çунса кайнă.

Противник, хăйĕн боевой машинисене пухса тата вăйлă противотанковăй заслон туса хурса, оборонăна куçнă. Тепĕр кунне вăл, çухатусем пулнине пăхмасăр, хăйĕн пысăк вăйне çапăçăва кĕртсе янă, пирĕн малти подразделенисен каялла чакмалла пулнă. Нумай вăхăт хушши тата вăйлă çапăçусем хыççăн тăшман темиçе километр малалла куçнă. Кунта тăшман Н-ски соединени çирĕп оборони çине пырса тухнă.

Тивĕçлĕ отпор илнĕ хыççăн, немĕçсем сыхланарах çапăçма тытăннă, анчах вĕсем çаплах малалла куçассишĕн çапăçма пăрахман. Вĕсем çапăçăва 30 танкран пуçласа 60 танк таран кĕртсе янă, пирĕн оборонăна шыранă, унăн вăйсăртарах вырăнне тупма тăрăшнă. Анчах пур çĕрте те ăна хирĕç çирĕппĕн тăнă, чылай туймаллах пырса çапнă.

Катуков полкăн часĕн малти подразделенийĕсем тăшманăн 60 яхăн танкне атакăланă. Ăна хирĕç Еремин полкăшăн танковăй подразделенийĕ пырса тухнă. Çапăçу хирне немĕçсен 34 машини выртса юлнă. Вăл машинăсем пирĕн танксем тата противотанковăй орудисем пенĕ снарядсем тивиннипе çĕмĕрлесе пĕтнĕ тата вут тивсе кайнă пулнă. Немĕçсем яланах хăйсен çĕмĕрĕк машинисене çапăçу хирĕнчен илсе тухма тăрăшаççĕ. Анчах ку расра вĕсем васкаса каялла чакнă пирки машинăсене çавăнтах пăрахса хăварнă. Пирĕн танкистсем буксирласа 30 машина илсе тухнă.

Çак кĕске те вăйлă çапăçура Лавриненко взвочĕ уйрăмăнах палăрнă. Вăл взвод фашистсен 14 танкĕ патне пырса тухнă. Вĕсенчен тăваттăмĕш Лавриненко хăй, виçĕ машинăна Копотов сержант экипажĕ тата лейтенант Поляков экипажĕсем пĕтерсе тăкнă. Взводăн сухату пулман.

Танксемпе пĕрле пирĕн артиллери вăйлăн ĕçленĕ. Немĕçсен Орел хулинчен çурçĕр енне куçса пыракан мотопехота колонни пирĕн артиллерин вутхĕмĕ айне пырса кĕнĕ. Пирĕн тупăсем пирвайхи хут пĕр харăс пенипех çав колоннăна çĕмĕрсе тăкнă.

Орел хулинчен çурçĕр енне куçса пырас çула пӳлсе лартнă. Çав çула тăшман пырса кĕмелле мар çирĕп туса хумалла.

Подполковник **А. КРАПИВИН.**

(«Красная звезда»).

СССР, США тата Великобритани представителĕсен ханашлăвне Москава Англипе Америка делегацийĕсем килни. **Укерчĕк çинче:** Москавра кĕтсе илни. Сулахайран сылтăмалла: лорд Бивербрук, г-н Гарриман, СССР Союзĕн США-ри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ К. А. Уманский полкăш тата Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский полкăш.

И. Иоселевич фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Завод ăмăртăва хутшăнчĕ

КАНАШ. **(«Чăваш Коммуни» корреспонденчĕ).** Москавăри Л. М. Каганович ячĕпе тăракан завод коллективĕ Октябрьти Социализмлă Аслă революцин XXIV çул тултарнине производствăллă çĕнĕ çитĕнӳсемпе, фронта пулăшассине вăйлатнипе кĕтсе илме чĕнсе каланине районри рабочисем, колхозниксем тата служащисем хапăл туса йышăнчĕç. Чылай предприятисемпе артельсем, Октябрь уявĕ умĕнчи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, производство планне срокченех тултарма, продукци туса кăларассине ӳстерме хăйсем çине обязательствăсем илеççĕ.

Подшипникпа тăвакан завод коллективĕ чĕнсе каланине вагонсем юсакан заводри кашни цехра, кашни бригадăра сӳтсе-явнă. Уяв умĕнхи социализмлă ăмăртăва организацилес ыйтупа производство командирĕсен канашлуне иртернĕ. Çакăн хыççăн цехсем, бригадăсем, уяв ячĕпе пыракан ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илнĕ. Вагонсем тăвакан цех (начальникĕ Трухин полкăш) октябрь уйăх планне 30-мĕш тĕлне тултарма, ӗç тухăçлăхне 20 процента çити ӳстерме тата вагонсем тăвассине хакне 10 процент таран чакарма пулчĕ, вагонсем юсакан цеха социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ. Вагонсем юсакан цех чĕнĕве хапăл туса йышăнчĕ тата октябрь планне 140 процентран кая мар тултарма обязательство илчĕ.

Ку цехсем социализмлă ăмăртупа стахановла движенире ялан малта пыраççĕ. Вагонсем тăвакан цех иртнĕ уйăх планне ăнăçлă тултарчĕ, вагонсем юсакан цех та планран ытлашши 18 вагон юсаса кăларчĕ.

Çак çĕнтерӳ цех начальникĕ коммунист Трухин полкăш ĕçе çирĕп ертсе пынинчен, рабочисем вăрçă вăхăтĕнчи задачăсене ăнланса ĕçленинчен килнĕ.

Вагонсем тăвакан цехри рабочисенчен 92 процентĕ ӗç нормисене ытлашшипех тултарса, 60 процентĕ икĕ-виçĕ хут ытла тултарса ĕçлеççĕ. Журба полкăшăн бригади сентябрь уйăх планне 331 процент, слесарьсен Якушев полкăш ертсе пыракан бригади — 282 процент, столярсен Гаврилов полкăш ертсе пыракан бригади — 270 процент, электросварщиксен Алексеев коммунист ертсе пыракан бригади 260 процент тултарнă.

Заводри партипе комсомол организацийĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва пур рабочисене те хутшăнтарассишĕн кĕрешеççĕ. Слесарьсен Коломиец тата Парфенов полкăшсен ертсе пыракан бригадисем пĕр-пĕринне ăмăртăва тухса, ку уйăхри плана 150 процент тултарма, ӗç вăхăчĕпе туллин усă курма, строительство материалĕсене перекетлеме пулчĕç.

Коммунист Малов, комсомолец Дамьянков полкăшсен бригадисем хăйсен производствăллă заданийĕсене тултарманни нихçан та пулман. Халĕ вĕсем уяв умĕнхи ăмăртăва хутшăнса çулталăкри плана декабрĕн 24-мĕш тĕлне тултарма обязательство илчĕç.

Колхозри производствăллă çĕкленӳ

ШАХАСАН. Ухманти «Победа» колхоз членĕсем Аслă Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Кашни бригада пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлет. А. Андреев полкăш бригади ыраш, çавăн пекех çуртыррисене те çапса пĕтерчĕ. Пĕрремĕш бригадăри тăваттăмĕш звено кăçал кашни гектартан 15 центнер сĕлĕ туса илнĕ.

Колхозри ытти бригадăсем те çурхи тырăсене çапса пуçтарнă. 7-мĕш бригадăри стахановец Г. Захаров полкăш кунне 700 пат тырă сăвăрать, 5,70 ӗçкунĕ илет.

Колхоза кăçал машинно-тракторнăй станци те çине тăрсах пулăшса тăрать. Халĕ колхозăн итемĕ çинче пĕр молотилка, тепĕр комбайн, электромолотилка ĕçлеççĕ. «БДО-34» молотилкăпа сменăра 8 тонна тырă çапас вырăнне машинист А. Осипов полкăш 14 тонна таран çапса, нормăна 190 процент тултарать.

Çĕртме сухи тунă çĕрте ĕçлекенсем те ӗç тухăçлăхне куллен ӳстерсе пыраççĕ. Тракторист Ф. Захаров полкăш СТЗ трактор хыçне 4 касăллă плуг кăкарса, сменăра 4 гектар сухалас вырăнне 6 гектар, М. Иванов тракторист 5 гектар сухалаççĕ. Çак трактористсем иккĕшĕ те сезонри плана 110-шар процент тултарнă. Пĕтĕмĕшпе илсен, трактор бригади (бригадирĕ Я. Сергеев полкăш) сезонри плана 85 процент тултарса, 3 пин килограмм ытларах горючи перекетленĕ. Сезон пуçланнăранпа пĕр трактор та çĕмĕрĕлнипе ĕçлемесĕр ларни пулман.

С. ШАДИН.

Вăрçă вăхăтĕнчи норма

Цех начальникĕ Назаров полкăш, вăлах цехри агитатор, хул хушшине çĕнĕ хаçатсем хĕстерсе катка-пичке цехне пырса кĕчĕ.

— Ну, мĕн çĕнини пур, Петр Михайлович?—çине-çинех ыйтрĕç Назаров полкăшăн рабочисем. Назаров полкăшăн рабочисене мĕн каламалли яланах хатĕр. Паян вăл Москаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан заводри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем Октябрьти Социализмлă Аслă революци XXIV çул тултарнине производствăллă çĕнĕ çитĕнӳсемпе, фронта пулăшассине вăйлатнипе кĕтсе илесси çинчен чĕнсе каланине вуласа ăнлантарса панă.

Кунти рабочисене Назаров полкăш малтанах вăрçă вăхăтĕнчи норма çинчен калаçса панă. Ку тăрăмăнчен пулнă кормăна вĕсем пăрахăçа кăларчĕç, сменăра икшер норма тултарса ĕçлесси вĕсен йăлине кĕрсе пырать. Рабочисем ĕçĕн пысăк тухăçлăхпе пахалăхне хăтартаççĕ. М. Назаров полкăш ӗç нормине 160 процент, И. Корнев полкăш 145 процент тултарса пыраççĕ. Катка-пичке цехĕ артельре малта пырать. Вăл виççĕмĕш квартали производствăллă плана 130 процент тултарнă. Ку цех Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва та артельри ытти цехсенчен малтан организацилерĕ.

«Трудовик» артельри ытти цехсенче те Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту сарăлса пырать. Цехпа цех, бригадăпа бригада, рабочипе рабочи ăмăртăва тухнă.

Рабочисенчен хăшĕсем фронта тухса кайнă пулин те артель пĕр чăрмавсăр ĕçлерĕ, ĕçлет те. Вăл çулталăкри производствăллă плана тултарнă ĕнтĕ. Вăрçă пуçланнă хыççăн вырăнти халăх валли 600 катка-пичке туса кăларнă.

Юлашки вăхăтра артельре строительство ĕçĕсене йĕркелесе янă: артель йĕри-тавра карта тытса çавăрнă, катка-пичкесем лартмалли çĕнĕ амбар, тепĕр арман туса лартнă. Арман пысăк тупăш парать.

Рабочисемпе работницăсем çĕршыв оборонин фондне 766 тенкĕ укçа хывнă, тимĕр-тăмăр пухса панă. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсемпе кĕпе-йĕмсем пухас ӗç хĕрсех пырать.

«Труд» артельре ĕçлекенсем, Москаври Л. М. Каганович ячĕпе тăракан заводри рабочисемпе работницăсен чĕнĕвне сӳтсе-явнă хыççăн, хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Октябрь уйăхĕнчи производствăллă плана катка-пичке цехĕ 170 процент, возчиксем—130 процент, ятарласа паракан задание пурнăçлас тĕлĕшпе ĕçлекенсем—150 процент тултарма пулчĕç. Пĕтĕм коллектив октябрь уйăхĕнчи производствăллă задание 20 процент иртерсе тултарма йышăннă.

В. МАКСИМОВ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Ертсĕ пырас ĕçе лайăхлатнă хыççăн

Карайри «Красный восток» колхоз (Красноармейски р.) иртнĕ çулсенче юлса пыратчĕ. Кăçал январь уйăхĕнче колхоз председателĕ пулма парти чиновникĕн кандидатне С. Ильин юлташа суйласа лартрĕç. Ильин юлташ колхоза çирĕплетес тĕллĕпе мĕнпур вăл хурса ĕçлет.

Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплинине çирĕплетни, ĕçлеме пултаракан колхозниксене пурне те ĕçе явăштарни колхоз ĕçĕсене вăхăтра туса пыма май пачĕç. Суракйне кĕске срокра тата лайăх тахалăхпа ирттерсе, тырпулсене çу кăçичченех лайăх пăхса ӳстерсе, кăçал колхоз нихăçанхинчен те вăйлă тырпул туса илчĕ.

Колхоз вăйлă тырпулсене пĕр тăкакçăр, кĕске срокра вырса пĕтерчĕ. Ыраш вырассине 7—8 кунта, çурприсене сентябрĕн 7-мĕшне вырса пĕтернĕ. Кĕлте кӳрессине те ытти колхозсенчен нумай малтан пĕтернĕ. Колхозниксем хăйсен ĕçне пĕтернĕ хыççăн юнашар ялти «Красное Сормово» колхоза пĕр жнейка ярса тырă вырма пулăшрĕç. Тырă вырнă çĕрте бригадăсенче, звеносенче массăллă-агитациллĕ ĕçе аван туса пынă. Канна вăхăтсенче колхозниксене Сталинпа Молотов юлташсем радио тăрăх туха калакă сăмахсем çинчен ăнлантарса панă. Совет Информацин Бюроăн пĕлтерĕвĕсене, фронтри геройсем çинчен вуласа панă. Стена хаçачĕсем кăларнă. Çакăсем колхозниксен ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пынă. Колхоз председателĕ Ильин юлташ ĕç вăрçă вăхăчĕ хушшинче пек урăхлатса сĕтнĕ. Ĕçе валтисене те çамрăкниссене те явăртарнă. Колхоз аппаратĕнче ĕç лекенсем те колхоз производствин кулленех хутшăнса ĕçлеççĕ. Колхоз председателĕ хăй яланах жнейкăлтырă вырчĕ. Авăн çапнă чух молотилка патĕнче ĕçлет. Колхозри хуралçă сем кăçинче хурал тăрасçĕ, кăнтăрла кĕлте кӳреççĕ, авăн çапасçĕ, тырă турт тарасçĕ, тата ытти ĕçсене те хут тăнаççĕ.

Колхоз октябрĕн 1-мĕш тĕлне государствăна тырă тăратас обязательствăна тултарнă, натурăплата парса татнă. Çĕрулми кăларса пĕтерсе государствăна парса татнă. Халĕ колхоз хĕрсен авăн çапать. Колхозниксем, колхоз производствинче стахановла ĕçлесе фронта пулăшнине пĕрлех, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухса пачĕç.

Л. КОНСТАНТИНОВ.

Немĕçсен фашистла бандисенчен тасатнă ялсенче красноармеецсем ĕçсыннисене немĕçсем çĕмĕрсе пĕтернĕ килçуртсене юсама пулăшаççĕ. **Укерчĕн çинче:** Смоленск облаçĕнчи Прилепы ялтă ялта боецсем А. Т. Пудовая колхозница пӳртне юсаççĕ. Малта: А. Т. Пудовая хăйĕн ачисемпе.

Л. Великжанин фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Хĕрарăмсем ответлă вырăнсенче

ÇЕРПУ. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа партине совет аппарачĕсенче ĕçлекен хăшпĕр арçынсем таван çĕршыва сыхлама хĕрлĕ Çар ретне тухса кайрĕç. Фронта тухса кайнă ответлă работниксем вырăнĕнче çĕнĕ работниксем—коммунистăсемпе партире тăван хĕрарăмсем ĕçлеме тытăнчĕç.

Коммунистка Екатерина Иванова мирлĕ самана вăхăтĕнче хула совет исполкомĕн финанс отделĕнче бюджет инспекторĕ пулса ĕçленĕ. Халĕ вăл ВКП(б) райкомĕн инструкторĕ пулса ĕçлет.

А. Белоусова юлташа ВКП(б) райкомне партстатистика секторĕн заведующийĕ, А. Дубаголова юлташа парткабинет заведующийĕ, И. Егорова юлташа райăçат редакторĕ пулса ĕçлеме куçарнă.

Хĕрарăмсем партин пуçламăш организацийĕсен секретарĕсем пулса ĕçлекенисем те сахал мар. Партин райпотребсоюз çумĕнчи пуçламăш организацийĕн секретарĕ пулса М. Сергюгина, прокуратура çумĕнчи пуçламăш организацин секретарĕ пулса Е. Семенова, Пысăк Чăрăш ялсоветĕнчи территориллĕ парторганизацин секретарĕ пулса М. Павлова юлташсем ĕçлесçĕ. Çавăн пекех чылай хĕрарăмсем ялсовет председателĕсемпе секретарĕсем пулса ĕçлесçĕ. Чурачăк ялсовет исполкомĕн председателĕ пулса А. Филиппова Тивĕш ялсовет исполкомĕн секретарĕ пулса А. Михайлова, «Ильич» колхоз председателĕ пулса Е. Васильева юлташсем ĕçлесçĕ. Колхоз правленийĕсенче счетоводсем пулса 10 хĕрарăм ĕçлет.

Партине совет аппарачĕсене тата колхоз производствине ертсе пырас ĕçе кунĕ коммунистăсемпе партире тăван хĕрарăмсем тăрăшса ĕçлесçĕ. Вĕсене ВКП(б) райкомĕ, райсовет исполкомĕ ĕçре яланах пулăшса пырасçĕ. Районри çĕрĕç пайĕ çĕнĕ счетоводсене пулăшас майпа çак кунсенче колхоз счетовочĕсен канашлăвне ирттерчĕ. Унта колхозсенче учет ĕçне мĕнле йĕркелесе пымалли тата СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Централный Комитечĕ колхозниксене ĕçĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановление мĕнле пурнăçа кĕртмелли çинчен каласа ăнлантарнă.

Хĕрарăмсене ертсе пырас ĕçе лартас çĕрте çитменлĕхсем те пур-ха. Тĕп çитменлĕх вăл — хĕрарăмсене колхоз руководствине сахалтарах явăштарни пулать. Малашне пирĕн колхоз председателĕсемпе счетовочĕсем пулса ĕç леме хĕрарăмсене ытларах явăштармалла пулать.

И. СКВОРЦОВ,
ВКП(б) Çĕрлӳ райкомĕн секретарĕ.

Фронтри парткомисси

Тăват сехет чарнусăр çĕр чĕтерĕ,
Снаряд та бомба çурăлни кĕрлерĕ,—
Ак халь шăпах, ниçта пĕр сасă çук,
Вăхăтлăха лăпланчĕ çапăçу.

Тен, пĕр минут та иртмĕ, тен, халех
Вутпа тавралăх витĕнĕ каллех,
Тен, çĕнĕрен тăхлан та вут сурса,
Пуçласа ярĕç тупăсем вăрçа...

Çак çил çинчи самантлăх шăплăхра,
Тăшман снарячĕ алтнă шăтăкра,
Тăван çĕршывăн паттăр ывăлне
Илет комисси парти ретне.

Маттур та палла лейтенант-зенитчик
Ответ парать ыйту илмессерен.

Ун батарейи эрнере вунçиче
«Мессершмита» ӳкернĕ тӳперен.

Ахальтен мар вăл халь те тӳпене
Тинкерчĕ мăшăр винтĕн куçĕпе:
Ав, мăнтăркка шур пĕлĕте сирсе,
Виç «Мессершмитт» пухаççĕ мĕкĕрсе.

«Тăшман вĕçсе сывхарнă ăйăпа
Ĕçе чараптăр»—тенĕ сăмахсем
Протокола пĕр тикĕс почеркпа
Юрсе юлаç... Комисси членĕсем

Зенитчик-лейтенант ĕçне курса,
Ана питех те çӳлĕ хак парса,
Тăван çĕршывăн паттăр ывăлне
Илтĕç пайне большевиксен ретне.

Ник. ЕВСТАФЬЕВ.

Стена хаçачĕ—хĕрӳллĕ агитатор

Колхозри стена хаçачĕн редакторĕ В. Клюков юлташ патне пĕррехинче 63 çулхи колхозник Василий Филиппович, хутла пĕлменскер, пынă.

— Виктор,—тенĕ вăл, ĕнер тĕттĕмленнĕ тĕлелле эпĕ хиртен тавранăтăм. Колхоз хирне пăхса савăнатăн, мĕн чухлĕ пурлăх. Çав пурлăха сыхласси-ке вăйлатмалла. Ыранхи номерте çавăн çинчен çырса кăларасахчĕ.

Василий Филиппов — Иртеменкассинчи «Сĕнтерӳ» колхоз тата комсомолăн пуçламăш организацийĕ кăларса тăракан «Ударник» стена хаçачĕн активлă корреспонденчĕ. Хутла пĕлменни ăна хаçат ĕçне хутшăнма пĕртте канăçлămсет: ăçта япăххине хурать, ăçта лайăххине — яланах редколлегие пырса пĕлтерет.

«Ударник» хаçатăн 21(201)-мĕш номерĕ тухнă. Унта Вас. Филиппов корреспондентăн «Çирĕп хуралламалла» ятлă статьи пулнă. Ватă корреспондент халĕ, вăрçă вăхăтĕнче, колхоз уйăхри, колхозăн обществăллă пурăхне тата колхозниксен килçурчĕсене уйрăмăнах тимлĕн хуралламалла сĕнет.

Систерекен статьясене çийĕнчех тĕрĕслесси йăлана кĕнĕ кунта. Тĕрĕслеççĕ, кирлĕ пек мерăсем йышăнаççĕ. Колхозра çĕрлехи хурала йĕркелес ĕçре Филиппован витĕмлĕ сăмахĕсем пулăшрĕç.

«Ударник» стена хаçачĕ кăçалхинпе 11-мĕш çул тухать. Çак хушăра унăн авторитетне ăс паракан витĕмлĕ сăмахсем çĕкленĕç. Кунтах тата хаçат илемлĕ тухнине те кăтартса хăварас пулать; унăн художникĕ Николай Орлов хаçат валли питех те килĕшӳллĕ картинăсем ӳкерет.

Стена хаçачĕ хăй тавра çирĕп актив явăштарнă. Хаçата 52 корреспондент сырса тăраççĕ, вăл шутра 9 комсомолец, бригадирсем—3 çын, фермăсенче ĕçлекенсем—6 çын т. ыт. те. Ялсовет председателĕ Е. Курбатов юлташ çырнă статьясемпе заметкăсене те часчасах курма пулать.

Колхоза уборка ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерме пулăшса пынă тата пулăшать те стена хаçачĕ. Колхоз уборкăна мĕн тухнăранпах вăл умсатьясенче уйăрăм ĕçĕсем çинчен çырнă. Акă вĕсем: «Кĕлтене капана хывас тата авăн çапас ĕçсене хăвăртлатар», «Пĕтĕм вăя—çĕрулми кăларнă çĕре» т. ыт. те. Кашни умстатьяра вырăнти фактсемпе туллин те пĕлсе усă курнă, ĕçе мĕнле йĕркепе туса пымаллине те лайăх сутатнă.

Уборка пуçлансанах вăл хăйĕн страницисене «Пирĕн показательсем» ятлă кĕтес кĕртет. Унта бригадăсем уйăрăм ĕçĕсене мĕнле пурнăçласа пынине кăтартса тăнă. Уборка ĕçĕсене пĕр цифрăсемпе кăна мар сутатса пынă стена хаçачĕ, — колхозниксене уйăрăм стахановецсен ĕç меточĕсемпе палăштарнă.

Стена хаçачĕ колхозри ытти ыйтусене те манса лăвармасть. «Хĕрлĕ Çар боецĕсене валли — ăшă тумтирсем!», «Хĕле кăтартуллăн хатĕрленер»—чĕнет вăл. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç колхозра мĕнле пулса пынине стена хаçачĕ тĕплĕн сутатать. Коххозниксем комиссие кĕрĕк пиншахсем, алшишсем, çăматăсем, алшăллисем, мулаххайсем пыра-пыра параççĕ. Çамрăк хĕрсем—У. Егорова. Е. Курбатова, М. Васильева, Е. Яковлева, З. Павлова юлташсем парнесем хатĕрлеççĕ.

Колхозăн хăшпĕр членĕсем Германи фашизмне хирĕç пыракан кĕрешӳ фронтне тухса кайнă. Çавăнпа та колхоза юлнă ĕç вăйĕпе туллин усă курас пулать: ĕçсем нумай. Стена хаçачĕ колхоза ку енчен те пулăшать. Нумай пулмасть, вăл профессор Л. А. Пельцихăн «Çĕрулмине вăхăтра кăлармалла» ятлă статьине сырса кăларнă. Унăн авторĕ: «Машинăсемпе усă курнă вăхăтрах çĕрулмине пĕр касăллă плугпа та кăлармалла», тесе сырать. Çак статьяна колхозниксене вулавçăсем лайăх ăнлантарса панă, вара çĕрулмине пĕр касăллă плугпа кăларма тытăннă.

Çавăн пекех, стена хаçачĕ боевой эпизодсем, тепĕр чухне Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене çырса кăларать. Хĕрлĕ Çарăн, Тинĕс-Çар Флочĕн тата пирĕн авиацин çитĕнĕвĕсем колхозниксене хавхалантараççĕ.

В. МАКСИМОВ.

Таван çĕршыв оборонин фондне

Чăвашсен педагогика институчĕн коллективĕ тăван çĕршыв оборонин фондне кашни уйăхрах пĕр кунхи ĕç укçине парса пынисĕр пуçне уйрăм преподавательсем, служащисем, студентсем заем облигацийĕсем пачĕç.

Педагогика кафедрин преподавателĕ Николай Степанович Степанов юлташ 4.265 тенкĕлĕх заем облигацийĕ пачĕ. Çавăн пекех Г. Германов 3.300 тенкĕлĕх, Д. Андреев 1.300 тенкĕлĕх, А. Хрусталев 1000 тенкĕлĕх, В. Сафрошкин 1000 тенкĕлĕх, В. Мажарова 2.925 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕç. Çапла вара вĕсем пурĕ оборона фондне 17.000 тенкĕлĕх ытларах заем облигацийĕсем пачĕç.

Кунсăр пуçне Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсем валли ăшă тумтирсем кулленех килсе параççĕ. Октябрĕн 7-мĕш тĕлне пĕр тăлăп, пĕр кĕрĕк пиншак, 14 мăшăр çăматă, 19 мăшăр çăм носки, 6 фуфайка, 22 мăшăр тир алшиш, 4 мăшăр çăм перчатка, 34 çĕлĕк, 6 ăшă кĕпе, пĕр брюки, 7 шарф, гимнастерка тата ыт. япаласем те пачĕç.

Институт директорĕн ĕçĕсене туса пыракан доцент Николай Иванович Бокарев пĕр мăшăр çăматă, пĕр çĕлĕк, ăшă кĕпе, шарф тата алшăлли пачĕ. Библиотека заведующийĕ Е. Токсубаева пĕр тăлăп пачĕ, А. Кириллова преподавательница кĕрĕк пиншак, шарф, алшиш, естествознани факультечĕн деканĕ Кондакова пĕр мăшăр çăматă, джемпер, пĕр мăшăр перчатка, Я. Железнов преподаватель — çĕлĕк, ăшă кĕпе тата икĕ мăшăр алшиш, Ф. Дмитриев студент çĕлĕк, алшăлли, ăшă портянка пачĕç. Çавăн пекех ытти преподавательсемпе служащисем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пачĕç. Студентсем те преподавательсемпе служащисенчен юлмаççĕ. Комсомол комитечĕн секретарĕ Михайлова юлташ Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă кĕпе, носки тата портянка пачĕ, С. Кириллова 2 мăшăр носки, алшиш, М. Ягунова çĕлĕк тата шарф пачĕç. Чылай студентăсем ушкăнăн-ушкăнăн пĕрлешсе, ăшă япаласем илсе параççĕ.

А. СЕМЕНОВА.
В. ИВАНОВА.

* * *

КАНАШ. Педагогика училищинчи преподавательсем, служащисем тата вĕренекенсем оборона фондне 772 тенкĕ укçа, 7475 тенкĕлĕх заем облигацийĕсем пачĕç. Преподавательница Е. А. Николаева оборона фондне заем облигацийĕ 700 тенкĕлĕх хывнă.

Училище коллективĕ хăйĕн пĕр кулăхи ĕç укçине оборона фондне вăрçă пĕтиччен парса тăма йышăннă. Виçсĕмĕш Пятилетка (тăваттăмĕш çулхи кăларăм) Заемăн укçине декабрь уйăхĕнче пĕтĕмпех тӳлесе татать.

Е. РОМАНОВА.

* * *

ÇЕМĔРЛЕ. Куллен кунах оборона фончĕ ӳссе пырать. Пояндайкинăри «Çĕнĕ пурнăç» колхоз çĕршывăн оборонин фондне 50 центнер тырă, 20 килограмм çăм панă. Колхозниксем оборона фондне çу, çăматă, сĕт, тĕрлĕ хаклă япаласем параççĕ. Акă, С. Попов 125 грамм кĕмĕл тенкĕсем, Я. Кудров, О. Федорова, М. Пояндаев çĕр грамм кĕмĕл тенкĕсем панă.

Колхозниксем заем облигацийĕсене пин тенкĕлĕх ытла оборона фондне хывнăç.

С. БАТЬКОВ.

Хулари ачасем таван çĕршыва пулăшаççĕ

Шупашкар хулинчи шкулсенче вĕренекенсем тăван çĕршыва мĕнпе май килнĕ, çавăнпа пулăшма тăрăшаççĕ. Суллахи каникул вăхăтĕнче, унтан кайран та вĕсем тимĕр-тăмăр пухас тĕлĕпе хĕрӳллĕн ĕçлерĕç. 25 тоннăна яхăн тимĕр-тăмăр пухрĕç. Ку ĕçре уйрăмăнах 5-мĕшпе 1-мĕш номерлĕ шкулсем малта пычĕç.

Кĕркунне енне кайсан пионерсемпе шкул ачисем шăлан çырли пухас ĕçе тытăнчĕç. Халĕ пурĕ 121 килограмм ытларах пухнă. 2-мĕш номерлĕ шкул кăна 50 килограмм пухнă.

Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтир пухас ĕçе пуçарса ячĕç. Вĕренекен ачасем ку тĕлĕпе те ашшĕ-амăшĕсенчен, пысăккисенчен юласшăн мар, мĕн те пулин парнелесшĕн. Акă, 5-мĕш шкулта 9-мĕш класра вĕренекенсем Томейкин пĕр мăшăр çăм носки, Кошечкина пĕр тир, 7-мĕш класра вĕренекенсем Старшовпа Акатова пĕрер шарф панă. Нумай классенче укçан пуçтарса, вăл укçапа пĕрлешсе япаласем илнĕ. 9-мĕш класăн 72 тенкĕ, 7-мĕш «Б» класăн 65 тенкĕ, 8-мĕш класăн 60 тенкĕ пухăннă.

2-мĕш номерлĕ шкултри ачасем пĕр аялти кĕпе, 3 çĕлĕк, пĕр алшăлли, пĕр мăшăр перчатка, 2 шарф, пĕр майка, пĕр мăшăр носки пухса панă.

Е. В.

Выльăх апачĕпе тĕрĕс усă курмалла

ССР Союзĕн Совнаркомĕ 1941 çулта майăн 29-мĕшĕнче «Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç валли выльăх апатне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени тăрăх, кашни колхозрах выльăхсене витесенче усранă пĕтĕм тапхăр валли выльăх апатне уйăхсерен расходламалли план туса ăна колхоз правленин ларăвĕнче çирĕплетмелле. Выльăх апатне уйăхсерен расходламалли план тунă чухне выльăхсем валли вĕсене кĕтӳре çӳретмелле пуличчен пур йышши апатсем те йĕркеллĕ çитсе пырассине шута илес пулать.

Чи малтанах выльăх апачĕсене тĕрĕс шута илсе тухни кирлĕ. Выльăх апачĕ мĕн чухлĕ пуррине тарасапа виçсе пĕлмелле, шултра апатсене капанрах виçме пулать. Уйăхир бригадисемпе звеносем туса илнĕ пур йышши апатсене те виçсе акт тăрăх йышăнмалла. Çав акт çине мĕн чухлĕ туртнине, апатсен пахалăхне, капана хывнин тата ăна пăхса усранин пахалăхне кăтартса çырмалла. Выльăх апачĕсене сыхласа усрассишĕн тата вĕсемпе тĕрĕс усă курассишĕн колхозсен председателĕсемпе кладовщикĕсем ответ тытаççĕ. Пысăк колхозсенче кладовщиксене пулăшма помощниксем-фуражирсем уйăраççĕ.

Пур колхозсем те апат-çимĕç хатĕрлемелле план илнĕ. Çак плана тултарас пулать кăна мар, ăна ирттерсе тултарассишĕн кĕрешмелле. Выльăх апачĕ хатĕрлемелли ӳсентăрансем халь пĕтмен-ха, вĕсене мĕн май килнĕ таранах хатĕрлеме васкамалла. Улăмсене, вăрмансенчи куракселе тата пахча-çимĕç калшĕсене пуçтармасăр хăварма юрамасть. Пурне те кĕске вăхăтра пуçтарса кĕртсе силоса хывас пулать.

Çапла вара, хатĕрленĕ пĕтĕм апата шута илнĕ хыççăн кашни ферма валли выльăхсене витесенче усранă пĕтĕм тапхăр валли выльăх апатне расходламалли план тумалла. Иртнĕ çулсенчи практика çакна кăтартса пачĕ: выльăх апатне ним шутсăр расходланă колхозсенче выльăх апачĕсем питех те нумай усăсăр пĕтрĕç. Çулталăк пуçламĕшĕнче выльăхсене виçесĕр апат панипе çуркунне варă ыраш улăмĕ çине кăна тăрса юлчĕç. Çавна пула выльăхсем çава начар тухрĕç. Çак çитменлĕхе кăçал тăвас пулмасть, кашни колхозăн халех выльăх апатне расходламалли календарлă план туса катĕрлемелле.

Выльăх апачĕсене уйăхсерен расходламалли плана тунă чухне малтан выльăх йышĕ ӳсессине тата çăлтăр выльăхсене ватă выльăхсен шутне куçарассине шута илес пулать. Çакăн хыççăн выльăхсен виçипе вĕсен продуктивноçне тата хăш выльăх мĕнле ĕçре ĕçленине кура выльăх апачĕн талăкри рационне тумалла. Çак рацион тăрăхах кашни уйăхра мĕн чухлĕ выльăх апачĕ кирлĕ пулассине палăртмалла. Çапла вара хăш уйăхра мĕнле капанран апат илесси палла пулать. План тунă чухне çавăн пекех выльăх апачĕн пахалăхне тата ăна хăш вăхăтчен сыхласа усрассине те кăтартни кирлĕ.

Колхоз правленийĕ выльăх апатне уйăхсерен расходламалли плана çирĕплетнĕ хыççăн, сĕтеклĕ тата шултăра апатсене, çавнашкалах концентратлă апатсене ферма заведующийĕсене кладовщиксем е фуражирсем урлă колхоз председателĕпе счетовод ала пуснă ордерсем тăрăх парса тăраççĕ. Ферма заведующийĕ хăй илнĕ выльăх апачĕсене сыхласа усрас тата тĕрĕс расходлас тĕлĕшпе колхоз правленийĕ умĕнче ответлă пулса тăрать. Колхозсенче ревизи комиссийĕсен выльăх апачĕсене мĕнле сыхласа усранине тата вĕсемпе тĕрĕс усă курнине кашни уйăхрах тĕрĕслемелле.

Выльăх апачĕсемпе лайăхрах усă курас шутпа, колхозсенче выльăхсене тăрантарас умĕн апат турас, улăма пăспа çемçетес, тĕштырăсене тата жмыхсене авăртас, çавнашкалах тымар-çимĕçсене турас, çĕрулмине пĕçерсе парас ĕçе анлăн туса пырас пулать.

В. ЛАЗАРЕВ.
ЧАССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн выльăх-чĕрлĕх Управленин старший зоотехникĕ.

Пахча-çимĕççене хăвăрт пухса кĕртер

Республикăри чылай районсенче пахча-çимĕçсене пухса кĕртес ĕç ăнăçлăн пырать. Чкаловски район октябрĕн 1-мĕш тĕлнех çĕрулми кăларса пĕтерчĕ. Шăмăршă районĕнчи колхозсем те, купăстасăр пуçне, ытти çимĕççене йăлтах пухса кĕртнĕ.

Пахча-çимĕçсем кăçал вăйлă пулнă. Шăхасан районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз гектартан 190 центнер, «Новая жизнь» колхоз 175 центнер çĕрулми туса илнĕ. Çĕнĕ Салари «Красный бригадир» колхоз (Çĕрпӳ р.) пахча-çимĕçсем сутса 150 пине яхăн тупăш илнĕ. Çакăн пек вăйлă пахча-çимĕçсем туса илнĕ колхозсем районсенче темĕн чухлех.

Паллах, ăнса пулнă пахча-çимĕççене вăхăтра пухса кĕртмелле. Ку ĕçе вăрама ярма юрамасть. Кашни колхозăн халь, ытти ĕçсене туса пынă хушăрах, пахча-çимĕççене хăвăртрах пухса кĕртме васкамалла. Вăрçă вăхăтĕнче кашни килограмм çимĕç хаклă, ăна пĕр тăкакçăр пухса кĕртмелле. Çакна Йĕпреç районĕнчи колхозсем тĕплĕн тыта илменха. Ку районра пахча-çимĕççене пухса кĕртме тытăнманпа пĕрех. Çĕрулми пулса çитмен, теççĕ кунти руководительсем.

Партине правительство ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пыма пур енчен те пулăшса пырасçĕ. СССР Союзĕн Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, çĕрулми кăларнă çĕрте ĕçлекен колхозниксене ĕçĕн натурăпа тӳлемелле. Çапла вара, колхозник кунне 20 пăт çĕрулми кăларсан, 2 пăт çĕрулмине хăй çумне илме тивĕç. Çавăн пекех, кăларнă çĕрулмине хатĕрлев пунктне турттаракан колхозниксене те ĕçĕн ытти колхозниксене тӳленĕ пекех тӳлеççĕ.

Кунсăр пуçне колхозсене çĕрулми кăларма колхозра тăман рабочисене, служащисене тата ытти çынсене явăçтарнă пулсан та, вĕсене ĕçĕн колхозниксемпе танах тӳлеме ирĕк панă.

Çапла туни ăнтă колхозсене пахча-çимĕççене чи кĕске вăхăтра пуçтарса кĕртме май парать. Ĕç вăйă çитмен колхозсен пахча-çимĕççене пухса кĕртнĕ çĕрте колхозра тăман çынсен вăйĕпе те анлăн усă курма тăрăшас пулать. Çанталăк юсанасса кĕтсе лармалла мар, кашни сехетне туллин усă курма мĕлни кирлĕ.

Хăшпĕр машинно-тракторнăй станцисенче çĕрулми кăлармалли машинăсем пур, çав машинăсемпе пуринпе те усă курмалла. Çĕрулми кăларнă çĕрте плугсемпе иртнĕ çулхинчен ытларах усă курма тăрăшмалла.

Пахча-çимĕççене пухса кĕртмелли пĕтĕм ĕçсене тăкаланчăка хирĕç кĕрешес лозунгпа туса ирттермелле. Уйрăмăнах ĕçĕн пахалăхĕ çине тимлĕн çавăрнса пăхмалла. Чи малтанах çĕрулмисене касса ватса пĕтересрен сыхă пулмалла. Мĕншĕн тесен, кĕреçепе кас.са суранлатнă çĕрулми час çĕрет. Çавăн пекех пуçтарнă тата пушатнă чухне те çĕрулмине пăрахса çеменĕрме юрамасть.

Колхозсем кăçал çĕрулмине хранилищесене иртнĕ çулхинчен ытларах хывараççĕ. Хĕл кăсарма хăварнă çĕрулми çав çĕртĕр тесен, хранилищесене малтанах лайăх типĕтсе тата дезинфекцилесе хатĕрлемелле. Суранлă пĕр çĕрулмине те хранилищесене кĕртес пулмасть.

Çĕрĕç пайĕсен пахча-çимĕççене вăхăтра пуçтарса кĕртес ĕçре пуçарса ертсе пымалла.

Кая юлмалла мар

ÇЕМĔРЛЕ. Чылай колхозсенче çĕрулми кăларас ĕç пысăк хăвăртлăхпа пулса пырать. Паянхи куна Пĕренешри «1-ое Мая», «Большевик», Камашри «1-ое Мая», Ленин ячĕпе тăракан колхоз çĕрулми кăларна пĕтерчĕç. Çак колхозсенче халь çĕрулми типĕтессине организацилеме. «Молодая сила» колхозра çĕрулмине пекарньăра типĕтеççĕ.

Çав вăхăтрах хăшпĕр колхозсенче пахча-çимĕççене пухса кĕртме пачах васкамаççĕ. Егоркинăри «Большевик» колхозăн 38 гектар çинчен çĕрулми пухса кĕртмелле, халĕ 10 гектар çинчен çеç кăларнă. Пояндайкино колхозĕ те 40 процент кăна çĕрулми кăларнă. Çак колхозсен пахча çимĕççене хăвăртрах пуçтарса кĕртме васкамалла.

Кашни сехетпе усă курмалла

ÇЕРПУ. Районри пур колхозсенче те çĕрулми кăларма пуçланă. Октябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче пурĕ 837 гектар çинчен çĕрулми кăларнă. Йĕкĕрвар тата Чурачăк ялсоветĕсенчи колхозсем çĕрулми кăларса пĕтерчĕç. Çав хушăрах хăшпĕр колхозсенче ку ĕçе ячĕшĕн кăна туса пыраççĕ. «Цивильстрой», «Пионер», «Авангард» колхозсем ик-виçшер гектар çеç çĕрулми кăларнă. Çак колхозсенче хĕрсе ĕçлес чухне ытларах çанталăк лайăхланасса кĕтсе вăхăта ирттереççĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем параççĕ

ÇЕРПУ. Хыркассинчи «Кульмет» колхоз çăм тапакан арман вăйĕпе авăн çапассине организацилеме. Арман кĕлечĕ çумне 4 лаша вăйĕпе авăн çапмалли молотилка вырнаçтарса лартнă. Çак молотилкăпа кунĕн-çĕрĕн авăн çапма пулать. Талăкра вĕсем 80 урапа тарăн çапаççĕ. Молотилка патĕнче пĕтĕмпе те 10 çын кăна ĕçлет. Авăн çапас ĕçе механизацилеме пуçланă. Малтан кăларнă çĕрулмине «Двигатель революции» колхоз 38 центнер, «Красный воин» колхоз 24 центнер леçсе панă.

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Эткерти «Новая жизнь» колхоз государствăна çĕрулми парса татрĕ. Обязательство тăрăх, государствăна 59 центнер çĕрулми памалла пулнă пулсан, вĕсем 62 центнер панă. Колхоз халь колхозниксемшĕн çĕрулми лама пуçланă. Малтан кăларнă çĕрулмине «Двигатель революции» колхоз 38 центнер, «Красный воин» колхоз 24 центнер леçсе панă.

В. ВИКТОРОВ.

Англи авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: ăнер кăнтăрла Англи самолечĕсем Остендери порт çине тапăннă. Суднăсем, ангарсем тата доксем çине бомбăсем пăрахнă. Моторлă пĕр судно çунса кайнă тата ытти икĕ карапа сиенленĕ. Шербург районĕнче противникăн пысăк мар танкерне çуитарса янă.

Çыраври авиацин самолечĕсем октябрĕн 10-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле, çанталăк начар тăнине пăхмасăрах, Норвегин хĕвеланăç çыранĕнчи Олесунь портĕнчи суднăсемпе ытти объектсем çине пырса тапăннă.

Германин пĕччен самолечĕ Англин Кăнтăр-Хĕвеланăç çыранĕ çине бомбăсем пăрахнă. Темиçе çурта çĕмĕрнĕ.

Вăтаçĕр тинĕсĕн бассейнĕнче октябрĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Триполи порчĕ çине бомбăсем вăйлăн пăрахнă. Якорь çинче тăракан дозорти темиçе суднăна пĕтернĕ тата сути-илӳ тумалли икĕ парохода сиенленĕ.

Ливири Мисратпа Сирта пункчĕсем хушшинчи çул çине бомбăсем пăракса, грузовой автомашинăсене нумай пĕтерсе тăкнă е пысăккăн сиенленĕ.

Англи тральщикĕ Германин подводнăй лодкине пĕтерсе тăкнă

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин патруль службине туса пыракан «Лэди Ширли» ятлă тральщикĕ тинĕс çинче неприятелĕн пысăк подводнăй лодкине курнă. Лодка шыва хуллен путса кĕнĕ, анчах тральщик пăрахнă тарăн анакан бомбăсем ăна çĕнĕрен шыв çине кăларнă. Тăвată дюймлă орудирен пенĕ снарядсем лодкăн корпусне пырса лекнĕ, вара экипаж ирĕксĕрех парăннă. Путарнă лодка экипажĕн составĕнчи 44 немĕçе, тытăна лекнĕскерсене, тральщик Гибралтара илсе пынă. Тральщикăн экипажĕнче 30 çынран ытла пулман.

Итали флочĕн йывăр çухатăвĕсем

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕ, Англи источникĕсем çине кăтартса, Александрия хулинчен (Египет) çапла пĕлтерет: Англи атакисене пула Итали суту-илӳ флочĕн виççĕмĕш пайĕ, Итали миноносецĕсен çурри, 10 пин тонна водоизмещенилле пур крейсерĕсем те тата пĕр броненосец стройран тухнă. Кунсăр пуçне, икĕ броненосец хытă сиенленнĕ.

Де Голь генералăн сăмахĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Ирĕклĕ Франçин национальнăй комитечĕн председателĕ генерал де Голль октябрĕн 8-мĕшĕнче Франци валли радио тăрăх сăмах тухса калана. «Вăл çапла пĕлтернĕ: союзниксен вăйĕсем 8 хут ӳсрĕç, вĕсем икĕ çул каярахринчен 30 хут лайăхрах хĕçпăшалланнă. Чипер шухăшлама пултаракан кашни çын, вăл Парижра-и, Лондонра-и е Берлинра пурăнать-и, унăн хăйĕн шухăшне халаса пама май пур-и, çук-и, анчах вăл Германия пуçпулса тăма çĕнĕрен хăтланнинчен каллех нимĕн те тухманнине курса тăрать.

Юлашкинчен де Голль çапла калана: французсем нимĕçсемпе сутăнчăксен шăпине лайăхрах пăхса тăччăр. Мана шанса тăрăр: вĕсене вилме пӳрнĕ. Франция пирĕнпе.

Германипе Финлянди хушшинчи хирĕçӳсем

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Швецири «Эребру курирен» хаçат çапла пĕлтерет: Гитлерла Германипе Финлянди правительстви хушшинче финн войскисем хĕвелтухăçĕнчи фронтра малалла çапăçас ыйту пирки пысăк хирĕçӳсем тухнă. Финляндири халăх массисен миршĕн пыракан движенийĕ пирки нимĕçсем канăçсăрланса ӳкнĕ, Финляндия сепаратлă мир çинчен калаçма тытăнас тăкан, нимĕçсем ăна оккупацилессипе хăратнă. Германи командованийĕн çурçĕр фронтĕнчи хăшĕр участокĕнче финсен чăçĕсене Германи салтакĕсемпе улăштармалла пулнă, мĕншĕн тесен финсем малалла çапăçма килĕшмен.

Словакири лару-тăру

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Чехословакин пичет бюровĕ çапла пĕлтерет: Словакире кăмăлсăрлăх ӳссех пырать, çав кăмăлсăрлăх Германи пуханийĕсен—Тисопа Тух майлă пулма килĕшмен католикла организацисемпе священниксене пĕрмаях хĕссе пынă пирки те ӳссе кайнă. Юлашки темиçе кун хушшинче 600 çынна ытла арестленĕ, вĕсем хушшинче Савела тата Лукашевич священниксене тата эрнере пĕрре туха тăракан «Словенски свет» издательне арестленĕ.

Çав вăхăтрах çапла пĕлтереççĕ: нимĕçсем Словакире кăна мар, унпа кӳршĕ Венгрин ту çинчи районĕсенче те тирсене, кĕрĕк пинаксене тата хĕллехи спортăн тĕрлĕ хатĕрĕсене тытса илеççĕ.

Рузвельт конгреса янă послани

ВАШИНГТОН, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рузвельт конгреса послани янă, унта Америкăн нейтралитет çинчен калакан пĕрремĕш законне 1935 çулта йышăннăранпа пĕтĕм тĕнчери обстановка тĕпренех улшăнчĕ, тесе калана. Нейтралитет çинчен калакан 1939 çулти закона нацистсем мĕнпур тĕнчере хуçа пулса тăма хапсăннии чăн-чăн масштабĕсене нумай мар çынсем кăна ăнланса илнĕ вăхăтра йышăннă. Çав условисенче нейтралитет çинчен калакан закон вырăнлă пек курăннă, çапла ун чухне Мажино линийĕ пирки те иккĕленмелли пулман. Анчах унтанпа вăрçă пĕр континент çинчен тепĕр континент çине сарăлса пычĕ, тата нумай çĕршывсене нацистсем тытса илсе чура туса хучĕç, пысăк хуласем ишĕлсе кăл куписем пулса тăчĕç, миллионшар этем чунĕсене—салтаксене, моряксене, çавăн пекех мирлĕ пурăнакан çынсене те—вĕлерсе пĕтерчĕç.

Çак çулсем хушшинче,—тенĕ посланире,—американецсем, хăйсен шухăшĕнче нихăçан та нейтральнăй пулман тата Гитлер жертвисен кунçулĕсем çине нихăçан та пĕр шухăшламасăр пăхман американецсем, США-н демократиллĕ традицийĕсемпе институчĕсене тата Хĕвеланăç полушарине хăратса тăракан хăрушлăха ăнланса илчĕç. Агрессорсем çĕнтерес пулсан çакă вăл пирĕншĕн мĕне пĕлтернине эпир ăнлантăмăр: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсене хăйсем Лонгайленд заливĕнче (Нью-Йорк çывăхĕнче) е Сан-Франциско заливĕнче хӳтлесе тăма пултарайман пулĕччĕç. Ун пек пулса тăни вăл питех те кая юлни пулĕччĕ. Америка политики çакăн çинче тытăнса тăрать: кучухнехи вăрçăн йывăр условийĕсенче хӳтлемне кирлĕ пулса тăрсассăн, пирĕн хамăра мĕнпур пек обстоятельствăсенче хӳтлемелле. Çавăнпа та конгреспа халăхăн уççăн палăртнă политикине пурнăçа кĕртнĕ çĕрте правительствăна чăрмавсем тума кирлĕ марри тухса тăрать. Пирĕн, — тенĕ Рузвельт,—çак чăнлăха йышăнмалла: пуриншĕн те паллă фактсем умĕнче нейтралитет çинчен калакан закон хăйне тĕпренех çĕнĕрен пăхса тухмалăтать. Çак законра тĕрлĕрен тӳррекке те кăнттăм статьясем пур, вĕсене пăрахăçа кăларни е улăштарни Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене паянхинчен нимĕн чухлĕ те нейтральнăйрах туса хумаççĕ, анчах çав статьясене пăрахăçа кăларни е улăштарни Америка çĕршывĕсене нумай ăнăçлăрах хӳтлеме тата халăхи вăхăтра тĕнчене çавăрса илме хапсăнакан çавтери пысăк вăйсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте нумай пахарах пулăшу пама май туса параççĕ.

Нейтралитет çинчен калакан закон тăрăх,—тенĕ малалла посланире,—эпир хăшпĕр районсене вăрçă пыракан зонăсем вырăнне хурса, çав зонăсене Америка ялавĕпе сӳрекен пĕр судно те кĕме пултарайманнине,—тесе палăртрăмăр. Гитлер çавăн пек зонăсене чылай анлăрах районсенче туса хучĕ, анчах тĕрĕссипе нимĕнле тинĕсре те, вăрçă пыракан зонăсене нимĕнле пӳлсе панисене те йышăнмасть. США-н тата Америкăри ытти республикăсен судниссене нацистсем Сурçĕр Атлантикăра палăртнă зонăсенче кăна мар, вĕсем ниçта-нимĕнле зона çинчен пĕлтермен Кăнтăр Америкăра та малтанхи пекех шыва путарасçĕ. Эпĕ,—тенĕ Рузвельт,—1939 çулти ноябрĕн 4-мĕшĕнче йышăннă законăн улттăмĕш статьине—Америка ялавĕпе сӳрекен, ютçĕршывсемпе суту-илӳ тăвакан суднăсене хĕçпăшаллантарма чăракан статьяна улăштарма ыйтатăп. Суднăсене хĕçпăшаллантарасси пĕре те кая хăвармасăр, питĕ васкавлăн тумалли ĕç пулса тăрать.

Нейтралитет çинчен калакан закона,—тенĕ малалла посланире,—тата ытти çавăн пек статьясем те пур, конгресс çав статьясене тӳрлетме вăраха хăвармасăр çийĕнчех тытăнĕ тесе шанатăп эпĕ, мĕншĕн тесен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Гитлер майлă вылянас вăхăт иртсе кайнă, пирĕн хамăран алăсене ирĕк пама вăхăт çитнĕ. Америкăри суднăсем тăвакан верфьсенчен нумай суднăсем тухаççĕ. Эпир вĕсене гитлеризма хирĕç кĕрешекенсене аренда йĕркипе паратпăр, вĕсем вăрçа хутшăннă державăсен порчĕсене гитлерла çаратăва хирĕç тăма продовольствипе машинăсем тата çар снаряженийĕсем турттараççĕ. Конгресс килĕшӳ пана тăрăх, çак майпа кирлĕ те паха грузсем нумай ăсанса тăраççĕ. Анчах чылай суднăсене нацистсем путараççĕ, çавăнпа та ĕнтĕ Америка таварĕсене Америка ялавĕ айĕнче турттарма кирли ытларах та ытларах тухса тăрать. Кивçен е аренда йĕркипе хĕçпăшал парасси çинчен калакан законăн чăн-чăн тĕллевне пурнăçа кĕртме конгресс тивĕçлипе май туса парассине, Америка грузĕсемпе кам ăнăçлăрах усă курма пултарать, çавсене грузсем тăратса пулăшса пыма Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене тивĕçлĕ май туса парассине эпĕ çирĕплĕн шанса тăратăп,—тенĕ Рузвельт. Конгресран эпĕ конгресс политикине пурнăçа кĕртме май паракан решени йышăнма кирлĕ тăк. Вĕçне çитиех пĕр çирĕп шухăшлă пулар.

Гитлер,—тенĕ посланире, — Россипа Англие пĕтерсе тăкас тесе хăй аллинчи мĕнпур ресурссемпе усă курма шут тытнă. Гитлер хăй вăхăтпа ăмăртмалла чупни çинчен пĕлет. Хăй чура туса хунă халăхсем хушшинче, çав шутрах немĕçсемпе итальянецсем хушшинче те, пуçланакан восстанисен хумĕсем кĕрленине илтет вăл. Америка паракан пулăшу вăйланассинчен хăрать вăл.

«Çавăнпа та,—тенĕ Рузвельт,—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тивĕçлĕхĕ Англипе Россипа, чуралăха хирĕç кĕрешекен ытти мĕнпур халăхсемпе уйрăм çынсене ытларах та ытларах хăвăртлăхпа пысăкрах та пысăкрах пулăшу парса пырасси пулса тăрать. Çакна пирĕн немĕнрен хăрамасăр, кама та пулин ыттисенчен маларах хумасăр туса пымалла. Хĕвеланăç полушарийĕн татăклă кунçулĕ пирки ĕç татăлать. Этĕ сире тулли кăмăлран çапла калатăп: Гитлерăн халăхи вăхăтри вăрçă планĕсем ăнăçлăн пурнăçа кĕрсен, пирĕн американецсен хамăран килсуртсене, хамăран ирĕклĕхе хӳтлессишĕн, халăхи вăхăтра вырăссен фронтĕнче асса кайнă вăрçă пекех, çавтери хаклă ларакан, çавтери ишĕлтерекен вăрçă туса пыма лекет. Гитлер хăйĕн сĕмсĕрлĕхне кăтартса пачĕ, эпир, американецсем пулса тăрса, çав сĕмсĕр ĕмĕтсемпе килĕшме пултараймастпăр. Пирĕн суднăсем сӳрекен тĕнчери пысăк мăнастирсем пăртса çĕмĕрнĕ. Америка ялавне тинĕссенчен хăваласа кăларма е çакна тăвассине хăратса тăма Гитлерăн подводнăй лодкисене, самолечĕсене ирĕк памастпăр.

Хамăран правăсене татăклăн хӳтлес ĕçе нейтралитет çинчен калакан законăн уйрăм статьисем нимĕн вырăнне те хуманнине эпир тӳссе тăма пултарайманнине эпир ăнлантăмăр. Ăсран кайнă çынсен намăссăр та сĕмсĕр ĕмĕчĕсем умĕнче нейтралитет çинчен калакан закон хăйĕн чăн-чăн хакне сухатнă. Эпир, американецсем, хамăран çула палăртса хутăмăр. Эпир хамăр çĕршывăн хăрушсăрлăхне, пĕрлĕхĕпе чыслăхне тытса тăма шутлатпăр. Пĕтĕм тĕнчери контроль туса тăрасси çинчен хапсăнса пуçĕсем пăтранса кайнă, кирек мĕнле ютçĕршыв державине пăхăнса тăрассинчен те тинĕссене ирĕклĕ туса, вĕсене хӳтлес политикăна çирĕп тытса пырасшăн эпир. Çакна эпир хамăрăн мĕнпур вăйсемпе, пĕтĕм чĕрепе, пĕтĕм ăс-хакăлпа туса пырăпăр.

Европăра ирĕке тухас движени ӳссе пыни çинчен Турци хаçачĕ мĕн çырать

АНКАРА, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). «Улус» хаçат çапла çырать: оккупациленĕ çĕршывсенче ирĕке тухас нацилĕ движени ӳссех пырать. Чехирен, Югославирен, Норвегирен тата Франçин оккупациленĕ зонинчен çĕнĕ выступленисемпе çĕнĕ приговорсем çинчен кунран-кунах сведенисем килсе тăраççĕ.

Пăлханусемпе саботажсем, тесе кăтартать хаçат, нумай сăлтавсем пирки пуçланса каяççĕ. Сăмахран, Югославире славянсен пĕрлĕхлĕ туйăмĕсем тата тăван çĕршыва çĕнĕрен ура çине тăратма тăрăшни халичченех палăрса тăраççĕ. Пур çĕрте те никама пăхăнас марришĕн кĕрешӳ пырать. Мăнкăмăлла та ирĕклĕ наци пулса тăракан норвежецсем Квислинг власне çăхăнасшăн мар. Франци халăхĕ те çак позици çинчех тăрать. Çак пăлханусем, тесе çырать хаçат, Европăри халама çук-пысăк массăсем «çĕнĕ йĕркен» идейипе нимĕн чухлĕ те килĕшменнине кăтартса параççĕ. Оккупациленĕ çĕршывсенчи халăхсене хăйсен асаплă шăпипе хилĕштерме хăтланни ăнăçлă пулман.

Иракăн çĕнĕ правительствин составĕ

ЛОНДОН, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви Иракăн ĕнер йĕркеленĕ çĕнĕ кабинечĕн составĕ çинчен пĕлтерет. Кабинетра çаксем: Нури Саид—премьер-министр тата оборона министрĕн обязанноçĕсене вăхăтлăха туса пыраканĕ; Салех Джабер—шалти ĕçсен министрĕ тата ютçĕршыв ĕçĕсен министрĕн обязанноçĕсене вăхăтлăха туса пыраканĕ: Али Мюмтаз—финанс министрĕ; Саид Бассам—юстици министрĕ; Тахсин Али—сутăç министрĕ; Мухаммед Амин Заки—çулйĕр тата обществăллă ĕçсен министрĕ; Джемал Бабан—социальнăй обеспечени министрĕ; Абдул Махди—хуçалăх министрĕ.

* * *

Иракăн çĕнĕ премьер-министрĕ генерал Нури Саид—Англипе союз тăвассишĕн тăнипе паллă. 1936 çулта Англипе Ирак хушшинче союз тăвасси çинчен калакан договора вăл активлăн хутшăнса пынипе тунă. Нури Саид вилçĕ хутчен ĕнтĕ премьер-министр пулнă.

Норвеги халăхĕ хирĕç тăрать

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Норвегире политикăллă лару-тăру çивĕчленсех пырать. Швеци пичечĕ çапла пĕлтерет: Тербовен радио тăрăх сăмах тухса калана, унта вăл Норвегире нимĕçсем туса хунă «çĕнĕ йĕркене» хирĕç тăрса пырсан, норвежецсене Норвегие аннексилессипе хăратнă. Çапла вара, Тербовен Германин Норвеги оккупанчĕсен политики пĕтĕмпех арканса кайнине ирĕксĕрех йышăннă.

Тербовен распоряжени кăларнă, унта вăл норвежецсене салатса янă кирек мĕнле политикăллă партире тăнине кăтартакан значоксем çакма е тумтир тăхăнма чарнă. Кун пек тумтир тăхăнине е значок çакнине Германи власĕсене хирĕç демонстраци тунă вырăнне хумалла пулать, тенĕ вăл.

Норвеги халăхĕ хирĕç тăрасси вăйсăрланмасть. «Вестмандланс линс тиднинг» хаçат Норвегири спорт площадкисене сиенлени массăллăн пулса пынисем çинчен пĕлтерет. Норвеги çамрăкĕсем квислинговецсем спорт тĕлĕшпе йышăннă пур мероприятисене те бойкот тăваççĕ. Осло таврашĕнчи Мюзенри спорт площадкине тата клуб çуртне çĕмĕрсе тăкнă. Бойкота хутшăнма килĕшмен спортсменсене патриотсем хĕсĕрлеççĕ. Публика бойкот тунă пирки зрелищесен укçа-тенкĕ енĕпе тӳснĕ сиенĕ темиçе çĕршер кронăна çитет.

Бергенре Норвеги çыранĕ таврашĕнче ишсе сӳрекен суднăсем çинче ишме килĕшмен 30 моряка арестленĕ. Моряксен забастовкисем ытти портсенче те пулса иртнĕ. Нимĕçсем Тронхеймра профсоюзсен руководителĕсене 100 çынна яхăн, вĕсен шутĕнчех моряксен союзĕн председательне Хамсоса та арестленĕ. Арестленисем вырăнне квислинговецсене лартаççĕ. Хыттăн хĕсĕрленине пăхмасăрах, рабочисем профсоюзсен член взносĕсене тӳлеме килĕшмеççĕ.

Нимĕçсен Ленинград патĕнчи çухатăвĕсем çинчен Турци хаçачĕ мĕн çырать

АНКАРА, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Ленинград патĕнчи вăрçă операцийĕсем çинчен пĕлтернĕ май, «Ени асыр» хаçат нимĕçсем калама çук пысăк çухатусем тӳсеççĕ, тесе çырать. Хаçат нимĕçсем пĕр крепость та хирĕç тăма пултараймарĕç, тесе çирĕплетме хăтланнинчен кулать. «Çапла çирĕплетсе каланине Одессăпа Ленинград пăрахăçа кăлараççĕ».

Панамăри государство переворочĕ

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Панамăра государство переворочĕ пулса, нацистсене кăмăллакан Ариас президента вырăнтан сирпĕтни çинчен пĕлтерет. Ариас Каба çине тарнă тесе пĕлтереççĕ. Çĕнĕ правительство туса хунă, ăна президент обязанноçĕсене туса пыракан Эрнесто Хаен Гуарди (иккĕмĕш вице-президент) ертсе пырать. Ариас майлă тăракансене нумайĕшне арестленĕ.

Ариас Германи майлă ориентацине нумайраххи тытса пынă. Октябрĕн 6-мĕшĕнче вăл Панама флагĕпе ишсе сӳрекен суднăсене хĕçпăшаллантарма чарса лартнă. Çапла чарса лартни Америкăн Панама порчĕсем çумне çирĕплетнĕ чылай грузовой суднисене те тивнĕ.

Колхозсене пулăшрĕç

КАНАШ. Педучилищĕре вĕренекенсемпе вĕрентекенсем сентябрь уйăхĕнче «Ударник», «Идея Ленина», «Красный путиловец» колхозсен уйхирĕсене тухса ĕçлерĕç. 15 кун хушшинче вĕсем 186 гектар тырă вырчĕç, 19 гектар çинчи пăрçана çулса шуçтарчĕç, 4 гектар чĕкĕнтĕр кăларчĕç, 1,5 гектар çинчи кантăра татса пачĕç. Колхозниксем пархатарлă ĕçсемшĕн тав турăç. Ĕç вăхăтĕнче класпа класс, вĕренекенпе вĕренекен хушшинче социализмлă ăмĕрту анлăн сарăлса пычĕ. Н. Кадикин, Н. Шадриков, И. Григорьев, М. Алексеев, Ф. Корсаков, Г. Сорокин тата ытти сем те нормăна ытлашшипех тултарса ĕçлерĕç.

Г. ДАНИЛОВ.

Колхозри ветсанитар

Василий Федорович «Правда» колхозра (Йĕпреç р.) ветсанитар пулса ĕçлет. Колхозниксем ăна яланах мухтаççĕ, унăн ĕçне пысăк вырăна хурса хаклаççĕ. Ветсанитаран кашни кун лашасем патĕнче, фермăсенчи вылăхсем патĕнче пулса вĕсен сывлăхне тата витесенчи тасалăха асăрхаса тăмалла. Çакна Василий Федорович пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсе пырать.

Ветсанитар Федоров тăрăпса ĕçленипе колхозра кăçал пĕр вылăх та чирлесе вилни пулман. Вылăхсен сывлăхĕ лайăх.

Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче Федоров колташ хăйĕн ĕçне татах та лайăхрах, пĕтĕм ĕçе вăрçă интересĕсене пăхăнтарса туса пыма пуçларĕ.

Д. М.

Çĕнĕ йышши танксем тăвас тĕлĕшпе чаплă çитĕнӳсем тунăшăн СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Кировски заводăн главнăй конструкторне Жозеф Яковлевич Котина Социализмлă Ĕç Геройĕн званине панă. **Укерчĕк çинче:** Социализмлă Ĕçĕн Геройĕ 1-мĕш рангри военинженер Ж. Я. Котин тата унăн арăмĕ орден носец 2-мĕш рангри военинженер Н. П. Поклонова.

М. Редкин фотоӳкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники)

Çĕршыва каучук кирлĕ

Чăваш республикинчи колхозсем çитес çура малтанхи хут кок-сагыз акса тума тытăнаççĕ. «Кок-сагыз акса тăвакан çĕр лаптăкне ӳстермелли тата кок-сагызăн тухăçлăхне хăпартмалли мероприятисем çинчен» СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă постановлени хыççăн, 1941 çулти çуркунне республикăри 8 районри 43 колхозра пĕтĕмпе 47 гектар çĕр лаптăкĕ çинче кок-сагыза планпа палăртмасăр акса тунă. Халăхи вăхăтра çав колхозсем кок-сагыз тымарне пуçтарса кĕртмелле. Малтанхи опытăн хăшпĕр результачĕсене илсе çакăн пек выводсем тума пулать.

Кок-сагыз туса илес ĕçĕн правилисене тĕрĕс пурнăçласа пырсан, унăн тымар тухăçĕ те лайăх пулать. Сăмахран, Тăвай районĕнчи «Красная Чувашия», «Красный Октябрь», Вăрмар районĕнчи «Арабось» колхозсем кашни гектартан кок-сагыз тымарне 20-шер центнер пухса илнĕ. Кок-сагыз акса хăварнă çĕр лаптăкне тăтăшах пăхса тăмасан, унăн тухăçлăхĕ те пĕтсе ларать. Ишлей районĕнчи «Аврора» колхозăн çаван пек пулнă та ĕнтĕ.

Халăхи вăхăтра Чăваш республикинчи колхозсенче кок-сагыза государство панă план тăрăх акса тумалла. Агромероприятисене вĕсен тĕплĕн туса пырас пулать, ниментле йăнăш та пулма тивĕçлĕ мар.

Кок-сагыз—çĕнĕ культура. Кок-сагыз тымарĕнчен чăн-чăн каучук тăваççĕ, вăл машина покрышкисем тунă çĕре каять.

Вăрçă чухнехи вăхăтра каучук питех те кирлĕ пулать. Хĕрлĕ Çара тăтăшах резина парса тăрасси—пирĕн умра тăракан ответлă задача. Кок-сагыз культурине çуркунне тата кĕр кунне (хĕлле валли) акса хăвараççĕ. Кĕркунне хĕл каçма акса хăварнă кок-сагыз лайăхрах пулать, вăл çуркунне çанталăк липĕ тăрсан та аптрамасть тата ĕç вăйĕ те сахалтарах ыйтать. Кĕркунне ăна çанталăк сивĕтес умĕн акса хăвармалла, çапла тунипе кок-сагыз шăтса тухаймасть, мĕншĕн тесен шăтса тухнă çамрăк калчасем сивĕпе шăнса пăсăлма пултараççĕ. Çаксене шута илсе, çак кунсенчех вăл культурăна хĕл каçма акса хăварма тытăнмалла. Чи малтанах колхозсен кок-сагыз акса хăвармалли çĕр лаптăкне хатĕрлесе хумалла. Акмалли сеялкăсене халех хатĕрлесе лартмалла, сеялка мĕн тарăнăш илсе акнине тĕрĕслесе пăхмалла. Кок-сагыз культурине мĕнле ге пулин тĕштырă хушшипе е пăчкă кĕрпипе хутăштарса акаççĕ. Кун пек пусан вăл пĕртан тата тĕрĕс ажăнса юлать. Çак акмалли материалсене малтан титĕтсе хумалла. Акса хăварнă ретсем çине торф тăкмалла.

Кок-сагыз нурĕ çытакан çĕр çинче лайăх çитĕнет. Унăн тухăçлăхĕ лайăх пултăр тесен, çĕре тарăн сухаласа çемçетмелле. Торфпа тислăк тăкса çемçетнĕ çĕр кок-сагызшăн питех те килĕшӳллĕ. Малтан хĕвелçавăрăнăп акса тунă çĕрпе хура çĕртме туса çемçетнĕ çĕр çинче те унăн тухăçлăхне ӳстерме пулать.

Хĕл каçма акса хăваракан участоксем лапам вырăнта, çуркунне шыв тăракан çĕрте пулмалла мар. Ун пек вырăнсене çуркунне акса хăварма усрамалла.

Кок-сагыз культурине нумай тымарлă çумкуръăксем ӳсекен тата хурткăшанкă ĕрчекен çĕр çине акма юрамасть, акас умĕн тепĕр хут сухалама та хушмаççĕ. Кун пек тусан çĕр сиенĕ лайăх пусăрăнмасть.

Кок-сагыз вăрри питĕ вĕтĕ пулать. Шăтса тухсанах вăл хăвăрт ӳсеймест. Çавăн пек чухне çумкуръăксем те ăна часах пусса илме пултараççĕ. Вăрлăха 0,5—1 сантиметртан тарăн аямалла мар. Çак хисепрен тарăнрах аксан вăл пачах шăтмасăр юлма пултарать. Вăрлăх тĕрĕс шăтса тухтăр тесен, акнă хыççăн 1 сантиметр хулăмĕш торф е ытти çĕрĕк япала сапса тухмалла. Вăрлăха тĕптыр акмалли сеялкăпах акма юрать, анчах ун сумне вăрлăх мĕн чухлĕ тарăн каймалли висене лартаççĕ. Вăрлăх акнă ретсем хушши 34—36 см. пулмалла. Ăна çăрах акса хăварсан, вăл лайăх çитĕнет, анчах кайран çĕре çемçетнĕ чухне канăç пулать. Çакна шута илсен, малтанлăха ретсем хушши 44,5 сантиметр пулма тивĕç. Лайăх шăтакан кок-сагыз вăрлăхĕ пĕр гектар çине 2 килограмм та çитет.

Çак çĕнĕ культурăна туса илес ĕçре агротехникăна тĕплĕн пăхăнса пырсан, пирĕн колхозсем 1942 çулта тухăçлă кок-сагыз туса илме пултараççĕ.

Райçĕрĕç пайĕнчи, МТС-ри агрономсен кок-сагыз вăрлăхне акас тĕлĕшпе колхозсене конкретлăн пулăшса пымалла.

А. БЕЛЯЕВ,
ЧАССР Наркомземĕн агротехникăпа механизаци управленийĕн главнăй агрономĕ.

БИБЛИОГРАФИ

Палач Гитлер вырăс халăхне нихăçан та чуралантараймĕ

П. Юдин çырнă «Палач Гитлер вырăс халăхне нихăçан та чуралантараймĕ» ятлă брошюрăра Германин фашистла пуçлăхĕсем совет халăхне хирĕç вăрçă пуçласа мĕн тума ĕмĕтленни çинчен каласа панă. Гитлер совет халăхне пĕтĕмĕшпех чуралантарасшăн, вăл вырăс халăхне кураймасть. Унăн ку тĕлĕшпе тискер план та пур. Хăйĕн «Манăн кĕрешӳ» ятлă кĕнекинче Гитлер çапла çырнă: «Эпир халĕ Европăри çĕнĕ территори çинчен калаçатпăр пулсан, эпир вара чи пирвай Россия çинчен çеç шухăшлама пултаратпăр», тенĕ. Çав кĕнекерех çак ирсĕр бандит Германи империйĕн чи кисем Хĕвелтухăçĕнче Урал тăвĕсем тăрăх каймалла, тесе çырнă.

Ку тĕлĕшпе вĕсене «турă» хăй те пулăшать иккен. Фашистсен теоретик ролĕнчи баронĕ Розенберг çапла ĕнентерме тăрăшать: вырăс çĕрĕсене нимĕçсен аллинче тытса тăмашкăн тата вырăс халăхне пăхăнтарса тăмашкăн нимĕçсене çӳлти турă хăй хушать, тет.

Ку ĕнтĕ кулăшла япала çеç. Анчах та çав розенбергсем, хăйсене-хăйсем ученăйсем вырăнне хурса, çавнашкал айванлăхсене кала-кала бандитла ĕçсем тăваççĕ. Эпир вĕсен чăн-чăн шухăшĕсене лайăхах пĕлетпĕр: вĕсем Совет Союзăн çĕрĕсене туртса илесшĕн, СССР халăхĕсене чуралантарасшăн.

Çав çӳлтерехре асăннă кĕнекерех Гитлер славян халăхне, чи малтан вырăссене, вĕсем «кĕçĕн раса» пулнă пирки нимĕçсем чуралантармалла тесе çырать. Вăл калană тăрăх, «вырăс чунĕ» пăхăнса тăма хăнăхнă.

Çапла вара, нимĕç фашисчĕсем вырăс халăхне (çавăнпа пĕрлех Совет Союзĕнчи ытти мĕнпур халăхсене те, вăл шутра—чăвашсене те) хăйсен правăсăр чурисем, чĕлхесĕр ĕç вылăхĕ туса хурасшăн. Гитлер хăй «çĕр чăмăрĕн хуçи» пулса тăрасшăн, нимĕç фашисчĕсене помещиксем тăвасшăн. Крепостной йĕрке, касмăк тĕнчи, тискерлĕх, тĕттĕмлĕх,—акă мĕн кӳресшĕн Гитлер.

Анчах та юнĕçсен Гитлерăн планĕ пурнăçа кĕреймĕ! Нимĕç фашисчĕсене пуçĕпех çĕмĕрсе тăкăпăр, фашистла ăпăр-тапăра çĕр çинчен кĕл туса вĕçтерĕпĕр!

* * *

Çак пĕчĕк брошюрăна колхозсенчи бригадăсенче, вуламалли çуртсенче вуласа колхозниксене, хĕрарăмсене, çамрăксене ăнлантарса памалла. Ку ĕçе ялти учительсен, комсомолецсемпе комсомолкăсен тумалла.

Кĕнекен чĕлхи—ăнланмалла чĕлхе. Ана куçарма та çăмăл чĕлхепе куçарнă.

В. Д.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхпе промышленность пайĕсен — 0—88, сырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 5210.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР, Заказ № 490. Ф. б. 58 84 п. л.

250.